# Асăрхăр: “Чăваш хĕрарăмне” халаллană такмаксен конкурсĕ • 10 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

45(915) №, 2015, ноябрь/чӳк, 14

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.


- Асатте – кил карти сыхлать, асанне кил ăшшине упрать — 2 стр.
- Хĕрарăмсем... арçынсене хĕнеççĕ — 3 стр.
- Амăшĕн хăвачĕ пулăшнă — 5 стр.
- Африка чăххине икĕ çултан ытла усрамалла мар — 8 стр.
- Арăмне хĕрхенмен арçын — 9 стр.
- Кукаçи пуласчĕ... — 11 стр.


ÇĂЛТĂР ÇӲПÇИ

## Култарма çăмăл мар



**Виктор ПЕТРОВ, ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ**

– Юрать, çак çĕр çинче чăваш хĕрарăмĕсем пур. Вĕсемсĕр эпир пурăнаяс та çукчĕ. Мускавра вĕреннĕ чухне Владимир Смирнов профессор: «Юрать, сирĕн тутăрлисем пур, куншăн савăнмалла», – тетчĕ пире. Унтанпа 33 çул иртсе кайрĕ. Театра çӳрекенĕсем халĕ те çавсемех – чăваш хĕрарăмĕсем, тутăрлисем. Арçынсем спектакль курма юратмаççĕ, культура çуртне кĕрсе ларса пĕр сехет кулас вырăнне лавкка умĕнче эрех ĕçеççĕ. Сахалăн тата вĕсем ялсенче. Пĕрисем – тĕрмере, теприсем – Мускавра. Яла çитсен кĕпĕрленсе тăнине асăрхатăп та: «Атьăр-ха, спектакль кĕрсе курăр, укçăр пур-и?» – тетĕп. «Пур», – текелеççĕ хăйсем. Анчах та культура çуртне кĕмеççĕ. Кам пĕлет, тен, вăтанаççĕ? Красноармейски тăрăхĕнчи пĕр хĕрарăм куççульпе тав туни халĕ те асран тухмасть. Анатолий Чебановăн «Вĕлтрен кайăкне» вылянăччĕ пĕр ялта. Путсĕр, ĕçкĕç арçын ролĕнчеччĕ эпĕ. «Тавтапуç сире, Виктор Аркадьевич, сирĕн спектакль хыççăн ман упăшка ĕçме пăрахрĕ», – терĕ тăхлачă. Çавăнпах арçыннисене клуба кĕртсе лартас килет манăн. Тен, вунă çул каяллахи пек, тепĕр арçын ĕçме пăрахĕ?

Юлашки вăхăтра çынсене култарма та йывăр. Куçран шăтарасла пăхса лараççĕ – шăл шурри те кăтартмаççĕ иçмасса. Татса паман ыйтăвĕсем нумай вĕсен. Пепкине ача садне вырнаçтарма тăнă – черечĕ çитеймен, е тата кредит илес тенĕ – банк хирĕçленĕ. Теприн тата урăхларах ыйту, кредит тӳлеме вăхăт çитнĕ – укçи çук. Спектакль вăхăтĕнче хăйĕн мăй тарăнăш ыйтăвĕсем тавра шухăшласа илет те çав çын, кулма та манса каять мăнтарăн.

Шӳт, монолог çыракан та çук халь. Çавăнпа та хамăнах режиссер та, автор та, артист та пулма тивет. Чăваш патшалăх телекуравĕпе хăçан спектакльсемпе киносем курма пуçлăпăр-ши? Мана ялтисем телевизорпа куркаланă та, çавăнта ĕçлет ку теççĕ пуль ĕнтĕ. «Чăвашла мыскарасем, кулăшла спектакльсем кăтартăр-ха», – тепĕр чухне кинемисем йăлăнсах ыйтаççĕ.

Ял çамрăкĕсен шăпи те кулянтарать. Шел, республика та, район та вĕсен ыйтăвĕсене курмăш пулать, пулăшас вырăнне çурăмпа çаврăнать. Йăва çавăрма çăмăл мар халь. Патшалăх процентпа панă кивçене тӳлес тесен çĕр çывăрмасăр икĕ-виçĕ çĕрте тар тăкмалла. Ĕçĕ тупăнсан лайăх-ха. Калăпăр, Америкăра пепке çут тĕнчене килет, ун валли йăлтах пур: çурчĕ те хатĕр, страхланă ăна. Ĕмĕр нуша курмасăр пурăнмашкăн пурлăхĕ те пур.

20-30 çул каялла театр училищисене вĕренме кĕме конкурс еплерех пысăкчĕ. Халь çамрăксене бухгалтер, экономист, юрист специальноçĕсем ытларах илĕртеççĕ. Культура тытăмĕнче малашне камсем ĕçлĕç-ши?

### ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле | |
|---|---|---|---|
| 14.11 | – 1 | – 5 | |
| 15.11 | – 4 | – 6 | |
| 16.11 | – 1 | – 2 | |
| 17.11 | – 3 | – 3 | |
| 18.11 | – 3 | – 6 | |
| 19.11 | – 3 | – 4 | |
| 20.11 | – 9 | – 3 | |

4 стр.



## Çемьере çеç хăтлă та ăшă

***Шупашкарти ачасемпе çамрăксен пултарулăх керменĕнче «Çемье вучахĕ» конкурса пĕтĕмлетнĕччĕ. Çĕнтерӳçĕ ятне Çĕрпӳри Львовсем тивĕçнĕччĕ. Ултă ачаллă мăшăр сцена çинче кăтартнă «Теремок» юмах нумайăшĕн асĕнче ырă асаилӳсемпе çырăнса юлчĕ-тĕр. Çакăн хыççăн вĕсем Ача усрава илнĕ çемьесен ассамблейин Мускавра иртнĕ пултарулăх конкурсĕнче республика чысне хӳтĕлесе 2-мĕш вырăн йышăнчĕç. Унсăр пуçне паян вĕсем пирки «Шупашкарта пурăнакан Львовсем» темелле. Çапла, çемье тĕп хуламăрта тĕпленме тĕв тунă.***

– Çĕрпӳпе уйрăлма йывăр пулчĕ. Анчах ачасем ӳсеççĕ. Пĕлтĕр Юльăна хулана ăсатрăмăр. Вăл та, эпир те хамăра валли вырăн тупаймастăмăр. Ачасем çемьепе пулма хăнăхнă пирĕн. Çавăнпах эрнере темиçе хутчен те Шупашкара килме тиветчĕ. Часах Аня та шкултан вĕренсе тухать. Унтан – ывăлсем. Пĕрле пулас тесех Шупашкара куçрăмăр. Паллах, ĕмĕрлĕх мар. Ачасем хăçан та пулсан çунат сарса йăваран вĕçсе тухаççех... – çемье пĕлтерĕшĕ çав тери хаклине палăртать Татьяна Витальевна.



ÇЕМЬЕ

# «Асатте кил хушши тытать, асанне – пӳрт ăшши»



**Елчĕк районĕнчи Таяпа Энтринчи Василий Петровичпа Феодосия Владимировна Петровсем 68 çул пĕрле килĕштерсе пурăнаççĕ. Пĕр ялта çуралса ӳснĕ вĕсем, пĕр класра вĕреннĕ. "Ĕмĕр ĕмĕрлесси – уй урлă каçасси мар", – тесе ахальтен каламан ваттисем. Пĕрлешсенех пурнăç урапи вĕсен те малалла пĕр тикĕс те çăмăллăнах шуман. Вăрçă çулĕсенче, ун хыççăн кам пуян та тулăх пурăннă-ши? Юхăннă çĕршыва ура çине тăратасси пирки шухăшланă пурте. Иртен пуçласа каçчен тар тăксан та çăкăрĕ сĕтел çинче çити-çитми çеç пулнă ял çыннисен. Иккĕн-иккĕнех çав. Пĕр-пĕрне çур сăмахран ăнланакан, лайăх пурăнассишĕн тăрăшакан çамрăк мăшăр пуç усман. "Çав хаяр вăрçăра чĕрĕ юлма пултарнă тăк ку мирлĕ саманара хитре, савăнса кăна пурăнма тăрăшмалла", – тĕллев лартнă хăй умне Василий.**

– Вăрçă пуçланнă куна лайăх астăватăп. Шкултa хуçалăх пулăшуçинче тăрăшаттăм. Кăнтăрлана киле таврăннăччĕ, çанталăкĕ шăрăхчĕ те пăртаклăха канма выртнăччĕ. "Василий, тăрха, вăрçă пуçланнă теççĕ", – вăратать анне. Шкултa радио пурччĕ, хăвăртрах ĕçе чупрăм. Юрий Левитан диктора директорпа итлерĕмĕр. Раштав уйăхĕнче, шартламара, окоп чавма илсе кайрĕç. Çуркунне, 1942 çулхи пуш уйăхĕн 8-мĕшĕнче, мана та повестка пачĕç. Атте чирлĕ тăрса юлчĕ, кайран чĕрĕлсе ура çине тăнă вăл, хăй ирĕкĕпе фронта кайнă. Аманса таврăннăскер 1944 çулта чирлесе вилнĕ. Эпĕ тăван яла 1947 çулта кăна таврăнтăм. Мана вăрçăран аннепе Николай шăллăм кĕтсе илчĕç. Йывăр та чухăн пурăннă ун чухне. Ĕне кăна хăтарса хăварнă ял çыннине", – каласа кăтартать Василий Петрович. Вăрçă вăхăтне, тыткăнра пулнă кунсене аса илсен куççульленчĕ ветеран. Сăмах май, Кĕçĕн Таяпа ял тăрăхĕнче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пулнисенчен пĕртен пĕр Василий Петров çеç тăрса юлнă.

Вăрçă хирĕнчен таврăнсан пĕр вăхăт колхозра ĕçленĕ Василий Петрович. Кайран хăйĕн вырăннех, шкула хуçалăх пулăшуçине, илнĕ ăна. Ача чухнех хитре ӳкернĕ вăл. Турă панă ăсталăха малалла аталантарас тесе çулсем самаях иртнине пăхмасăр Шупашкарти И.Я.Яковлев ячĕллĕ педагогика институтне, ӳнерпе графика уйрăмне, вĕренме кĕнĕ. Халь те аллине киçтĕкпе хут тытать-ха ветеран. Çутçанталăка сăнлама юрататъ вăл. 93 çула çитнĕ пулин те çак киленĕçе пăрахăçласшăн мар. Юратнă аслашшĕне, кукашшĕне ĕмĕр асра тытса пурăнма мĕнпур мăнукне илемлĕ картина парнеленĕ вăл. Шкулти вулавăшра "Нарспи" поэма тăрăх ӳкернĕ ĕçĕсем халĕ те упранаççĕ. К.В.Иванов çулталăкне халалласа унăн картинисем тăрăх композицисем йĕркеленĕ библиотекăра. Шкул хыççăнах Шупашкара художнике вĕренме тухса утнă вăл.

– Анчах та 100 тенкĕ тӳлемеллеччĕ, ун чухне вăл питĕ пысăк укçаччĕ. Аттепе анне ниепле те тупса параймарĕç. Мансăр пуçне çемьере тата пиллĕкĕн-çке. Çапах вĕренсе тухма ĕлкĕрейместĕмччĕ, вăрçă хирне илсе каятчĕç", – хăй пурнăçĕ пирки питĕ тĕплĕн каласа кăтартать Василий Петрович. Юнашарах ларакан Хветуç аппа: "Кĕскенрех, кĕскенрех тетĕп сана, эсĕ капла пĕр кунра та каласа пĕтерееc çук", – ларсан-ларсан аяк пĕрчинчен кăлт тĕкет упăшкине.

Пулас мăшăрне ачаран палланă Василий, унпа пĕр класра вĕреннĕ хĕрачана лайăх пĕлнĕ. "Питĕ тăрăшуллăччĕ вăл, манăн та, унăн та дневникре "пиллĕксем" кăначчĕ. Ун чухнех килĕшнĕ çав ĕнтĕ мана Хветуç, калама вара вăтаннă", – тет Василий Петрович.

1947 çулхине ялта пĕрисем туй кĕрлеттернĕ. Таяпа Энтри çамрăкĕсем пурте çак киле хĕр йĕнине итлеме пуçтарăннă. Шкул пĕтернĕренпе те пĕр-пĕрне курман Василипе Хветуç çакăнта тĕлпулнă. "Качча пыратăн-и мана?" – ыйтнă Василий. "Пыратăп", – çийĕнчех килĕшнĕ хĕр.

– Ара, манăн мĕнле те пулсан хăвăртрах вырнаçса юлмалла пулнă-çке. Анне йывăр чирлĕ, атте пулман. Питĕ чухăн пурăнаттăмăр. Василий çав кунах илсе кайрĕ мана килне. Туй пулман, çĕнĕ хăтасем ĕçсе çирĕç, пире пил пачĕç. Качча илекен тупăннăшăн савăннă ун чухне, çамрăксенчен чылайăшĕ вăрçăран таврăнайман-çке. Çавăн пек вăхăт пулнă, хĕрсем качча каяймасăрах ватăлнă. Пĕр-пĕринпе туслă çӳресе те курман, çапах лайăх пурăнтăмăр. Виçĕ ача çуратса ӳстертĕмĕр, ултă мăнук, мăнуксен тăхăр ачи халь пирĕн, – сăмах çăмхине сӳтет Феодосия Владимировна.

– Пурнăçра темĕн те сиксе тухать, килĕштернĕ çĕртех чашăк-тирĕк шакăртатасси те пулать. Каçарма пĕлмелле пĕр-пĕрне. Шăпа тикĕс килмест. Пирĕн, ĕлĕкхисен, уйрăласси пирки сăмах та пулман. Тăрăшуллă та тухăçлă ĕçлес, ачасене тĕрĕс-тĕкел çитĕнтерес тĕллеве мала хунă. Вăл вăхăтра пурте пĕр йĕркепе пурăннă. Куллен ĕçе утнă, юратнă çĕршыва çирĕплетессишĕн тăрăшнă. Çынсем пĕр-пĕринпе питĕ туслă пулнă, – чунне уçаççĕ ватăсем.

Василий Петровичпа Феодосия Владимировна виçĕ ача, икĕ ывăлпа пĕр хĕр, çуратса ура çине тăратнă. Пурне те аслă пĕлӳ панă. Елена Васильевна пенсие тухнă хыççăн та нумай-нумай çул судьяра ĕçленĕ. Геннадий Васильевич Таяпа Энтри шкулĕнче 24 çул директорта тăрăшнă. Анатолий Васильевич хăй пурнăçне çĕр ĕçĕпе çыхăнтарнă, вăл ялти фермер.

Паян ватăсем чи кĕçĕн ывăлĕпе Геннадипе тата кинĕпе Еленăпа пурăнаççĕ. Чăвашсен йăлипе çемье тĕп килте тĕпленнĕ. Ывăл-кинĕ пирки ăшă та ырă сăмах нумай каларĕ Хветуç аппа. "31 çул пĕрле эпир. Вĕсене пула пирĕн ĕмĕр вăрăм. Ырлăхра пурăнатпăр эпир. Япаласене çуса, якатса параççĕ, кил-çуртра яланах таса та типтерлĕ. Чăннипех те лайăх пăхаççĕ пире. Ывăл-хĕртен, кинсемпе кĕрӳрен сивĕ сăмах илтсе курман халĕччен", – терĕ вăл ăшшăн.

Василий Петровичпа Феодосия Владимировна 9 теçеткерен каçнă пулсан та килте пĕртте ахаль лармаççĕ.

– Атте кун сиктерсе сысна апачĕ пĕçерет, кĕркунне пахчана сухан тасатма тухать. Пĕрмай ывăлне пулăшма васкать, кăçал мăшăрпа иккĕшĕ беседка, выльăхсем валли витесем ăсталарĕç. Картишне те пирĕнтен маларах шăлса кайма тăрăшать. Анне ĕçрен килнĕ çĕре апат пĕçерет, чашăк-тирĕк те хăех çăвать. Качча килсенех мана: "Кин, хам пурăннă чухне нимĕн те ан сапла, сан ахаль те ĕç нумай", – терĕ. Йĕппе çипе аллинчен яман, алса-чăлха çыхнă, çĕленĕ, сапланă. Ăшă чунлă вăл питĕ, унран пурнăçра хам валли ыррине нумай илнĕ. Ачасене те хуняма пăхса пулăшнă. "Асатте кил хушши тытать, асанне – пӳрт ăшши", – тесе ахальтен каламан ваттисем. Çак каларăш пирĕн çемьепе çыхăннă. Аслисем пурришĕн телейлĕ эпир, вĕсем пуррипе кил-çурт тулли те ăшă, – терĕ телефонпа çыхăнсан шкултa акăлчан чĕлхи вĕрентекен кинĕ Елена Петровна.

– Пирĕн йăх вăрăм ĕмĕрлĕ. Çĕр çинче нумай пурăнасси хамăртан та нумай килет пулĕ. Паллах, эпир, ĕлĕкхи ăру, хальхисемпе танлаштарсан сывлăх енчен çирĕпрех пулнă. Çапах та çак кил-çуртра нихăçан та никам та пирус туртман, ĕçкĕпе те айкашман, – терĕ мана ăсатма тухсан типтерлĕхе юратакан Василий Петрович.

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

ÇЫРĂНТАРУ



# Вăрманлă тăрăха хулапа улăштарăн-и?

– Анне вунă çул почтальонра ĕçлерĕ. Кĕçех 80 çул тултарать вăл. Ачаран ăна хаçат-журнал, çырусем валеçме пулăшаттăм эпĕ. Вăл вăхăтра тата хальхи пек-и – яла купипе темĕн тĕрлĕ кăларăм килетчĕ, хăть мĕнле валеççе пĕтер. Хĕллехи çил-тăманра малтан çунапа киле сĕтĕрсе анаттăмăр. Почтальон сумки хальхи пек пушă пулман, калама çук йывăрччĕ. Çыру, саламлă открытка тавраш çӳретекен те нумайччĕ ун чухне. Çывăх çынсенчен уйрăлас килменнипе-ши, шкул пĕтерсен тăван ялах юлас терĕм, хулана пачах та чун туртмарĕ. Çакăншăн эпĕ нихăçан та ӳкĕнмен. Анне пенсие тухрĕ те ун вырăнне эпĕ йышăнтăм", – каласа кăтартать Патăрьел районĕнчи Ишлĕ Шетмĕ почта уйрăмĕнче 30 çула яхăн почтальонра тăрăшакан Ираида Зверева. "Ираида Ильинична питĕ яваплă, унпа хама та çăмăл, кирек мĕнле ĕçе те вăхăтра пурнăçлать. Хирĕçлеме те, "çук" е "кайран" сăмахсене те пĕлмест", – ырлать Ишлĕ Шетмĕри почта уйрăмĕн пуçлăхĕ Светлана Юркина.

Хамăрăн вулакансемпе тĕл пулас тата хаçат çырăнтарас тĕллевпе икĕ эрне каялла почтальонпа пĕрле Ишлĕ Шетмĕ ялĕ тăрăх çӳрерĕмĕр. 2016 çулхи пĕрремĕш çур çуллăхра илсе тăма "Чăваш хĕрарăмне" 23 çын çырăнчĕ. Вĕрентекенсем тата аслăрах ӳсĕмрисем пирĕн хаçатпа хаваспах туслашрĕç.

Ираида Ильиничнăпа Юрий Дмитриевич Зверевсем килĕштерсе, пĕр-пĕрне çур сăмахран ăнланса пурăнаççĕ. Ывăлпа хĕр çитĕнтернĕ вĕсем. "Ялтан тухса кайма нихăçан та шухăшламан эпир, мăшăр ман çемьере чи кĕçĕнни, тĕпкĕч, пулнă. Ишлĕ Шетмĕре çурт лартрăмăр. Çак вăрманлă, улăх-çаранлă, тĕлĕнмелле илемлĕ тăрăха хулапа епле улăштарăн? Йĕри-тавра – тӳпенелле кармашакан хырсем, çырли-кăмпине татса пĕтерме çук, выльăх валли курăкĕ çителĕклĕ, сывлăшĕ таса. Ырлăхра, çăтмахра пурăнатпăр эпир", – палăртать Ираида Ильинична. Кăмăллă та ырă чунлăскер пурне те пулăшма хатĕр, çавăншăнах ял çыннисем хисеплеççĕ ăна, кашни килтех хапăл туса кĕтсе илеççĕ. Шăрăх-и е çумăрлă çанталăк-и, çил-тăман алхасать-и е çумăр çăвать-и – ниме пăхмасăр, кашни кунах Ишлĕ Шетмĕ тăрăх утать те утать вăл, хаçат валеçнисĕр пуçне ял çыннисен ытти чылай ыйтăвне тивĕçтерет.

**Елена ГЛУХОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

**Хисеплĕ вулаканăм!**
**"Чăваш хĕрарăмне" çитес çурçуллăха çырăнма ан ман. Тăван-пĕтен, тус-тантăш валли те аван парне пулĕ хаçат – вĕсене çырăнса памашкăн май тупсан питĕ аван пулмалла.**

ÇЫРĂНТАРУ – 2016

«Хыпарсăр» пурнăç тунсăх та кичем, ПĔР ТĂХТАМАСĂР ÇЫРĂНСА ИЛСЕМĬ

| ХЫПАР | ХЫПАР – ЭРНЕ КУН | ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ |
|---|---|---|
| Почта уйрăмĕсенче | | |
| 625,62 тенкĕ | 325,92 тенкĕ | 343,80 тенкĕ |
| «Советская Чувашия», «Чăвашпичет» киоскĕсенче | | |
| 288 тенкĕ | 150 тенкĕ | 222 тенкĕ |
| Редакцире | | |
| 144 тенкĕ | 90 тенкĕ | 141 тенкĕ |



# Паян та чĕрĕ пекех

**Кăвар чĕреллĕ Çеçпĕл Мишши 1899 çулхи чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕнче килнĕ çак тĕнчене. Çапах юлашки çулсенче сăвăç çуралнине эрнекун паллă тăвассине йăлана кĕртрĕмĕр. Кăçал та унăн палăкĕ умне чӳк уйăхĕн 13-мĕшĕнчех пуçтарăнтăмăр. Ку мероприятие яланах пĕр çынсем хутшăнни çинчен çырма кирлех-ши? «Эх, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ патшалăх çамрăксен театрĕн артисчĕсен хăйсен пултарулăхĕпе тыткăнламаллаччĕ те çакăнта», – ахальтен мар кăмăлсăрланчĕ хăшĕ-пĕри. Çеçпĕл Мишши премине тĕрлĕ çулта илнисене те курас килетчĕ. Пурпĕрех чăваш сăмахĕ, юрри-кĕвви иртсе каякан транспорт шавне хупламалăх янăрарĕ.**



Чăваш халăх поэчĕ Валери Туркай калашле, юрлă çумăр та чăрмантараймасть пире çакăнта килсе Çеçпĕл Мишшине пуç таймашкăн, хамăр шухăша каламашкăн. Йĕркелӳçĕсем кăçалхи уява çĕнĕлĕх кĕртнĕ – Çеçпĕл Мишши премине поэт çуралнă кун палăк умĕнче пама пуçларĕç. Лауреатсен йышне икĕ çын – Чăваш халăх художникĕ Владимир Агеев тата Чăваш патшалăх академи симфони капеллин солисчĕ Вячеслав Вахтеркин – хушăнчĕ. Вĕсем чăваш ӳнерне тĕнче шайне çĕкленĕшĕн, юрри-кĕввине халăх хушшинче сарнăшăн тивĕçрĕç хисеплĕ çак ята.

Виталий Станьял ăсчах Çеçпĕл Мишши сăввисем çамрăк ăрушăн ялав пекех кирлине палăртрĕ. «Кĕрешӳ вĕçленмен-ха», – терĕ вĕрентекенсен вĕрентекенĕ. Халăх ырлăхĕшĕн кĕрешнĕ çыннăн ячĕ вара ĕмĕрсен хушшинче упранса юлнă. Нумаях пулмасть Красноармейски районĕнчи Кĕçĕн Шетмĕ ялĕнче пулнине аса илчĕ Виталий Петрович. Унта шкул ачисем сăвă калани килĕшнĕ ăна.

Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Раиса Сарпи кашни уяв тĕлне сăвă çырнине хăнăхрăмăр. Хальхинче те çĕнĕ ĕмĕт пулнăран пурăннине, ыррине кĕтнине çирĕплетрĕç унăн сăвă йĕркисем. Пĕрле пуçтарăнни çĕнĕ шанчăк, хăват хушма пулăшни çинчен каларĕ вăл.

«Çамрăк Улăп тăрать.
Пуçĕпе пĕлĕте перĕнет,
Куçĕнче – вут-хĕлхем ялкăшать...» – Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер Çеçпĕл Мишшине халалланă сăввипе пуçларĕ хăйĕн сăмахне.

Чăваш халăх çыравçи Денис Гордеев Çеçпĕл Мишшин кашни сăмахĕ пурнăç саккунĕ вырăнĕнче пулмаллине палăртрĕ.

Сăмахăма Валери Туркай шухăшĕпех вĕçлес килет. Чăнах, эпир асра тытнăран паян та чĕрĕ пекех Улăп-сăвăç.

Митинг хыççăн Шупашкарсем Канаш районне, Çеçпĕл Мишши çуралнă тăрăха, тухса кайрĕç. Унта та уяв мероприятийĕсем йĕркелеççĕ.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

Сергей ЖУРАВЛЕВ сăнӳкерчĕкĕ.

# Кальян... чыхăнтарать

**Чăваш Республикинче кальян туртассине хирĕç уйăхлăх пуçланчĕ. Çак эрнере ЧР Сывлăх сыхлав министерствинче мероприятисен планне тишкерчĕç. Чиновниксемпе общество организацийĕсен членĕсем усал йăлапа кĕрешес ĕçе вăйлатасшăн.**

Юлашки çулсенче табак йышне кĕмен хутăш туртасси сарăлчĕ. Çакна саккун хирĕçлемест. Çавна май уйрăмах çамрăксем ресторанта, кафере, кану ытти вырăнĕнче кальян туртма пуçларĕç. Çакă, шел те, модăна кĕчĕ.

Тухтăрсем каланă тăрăх, кальян организма пирусран ытларах сиен кӳрет. ЧР сывлăх сыхлав министерствин штатра тăман тĕп специалисчĕ Ирина Булыгина психиатр-нарколог «Сывă наци» общество организацийĕн ертӳçипе Кирилл Лукинпа, социаллă тата культура программисене пурнăçа кĕртме пулăшакан «Чăваш Ен» фонд президенчĕпе Михаил Федотовпа рейд ирттернĕ, тĕп хулари кальян туртакан вырăнсене кĕрсе тухнă. Унти вараланчăк тĕлĕнтернĕ, тĕтĕм-сĕрĕм чыхăнтарнă вĕсене. Ахальтен мар сывă пурнăç йĕркине саракансем çак вырăна тамăкпа танлаштарчĕç. «Кальян сĕрĕмĕ, чи малтанах, нерв тытăмне шар кăтартать. Çавна май çын тăнне çухатма пултарать е пĕр вĕçĕм пуç ыратать унăн», – ăнлантарать Ирина Евгеньевна. Кальян туртнă чухне сурчăкпа туберкулез, герпес, анлă сарăлнă инфекци ытти чирĕ куçать. Темшĕн çакна ăша хывасшăн мар çамрăк ăру.

ЧР экономика аталанăвĕн министерствин сектор ертӳçи Имма Иванова çирĕплетнĕ тăрăх, апатлану предприятийĕсен пуçлăхĕсенчен хăшĕ-пĕри, кальян сиенĕ пирки пĕлсен, унпа усă курма чарнă. Теприсем, тĕтĕмĕ ыттисене ан чăрмантартăр тесе, ун валли уйрăм вырăн уйăрнă.

Йĕрке хуралçисем кальяна тултармалли хутăшра табак тупсан предпринимательсене административлă е уголовлă явап тыттарассине каларĕç.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

# Тарăхнă та...

**Тăвай район прокурорĕ 27 çулти Е.Козлова тĕлĕшĕпе айăплав акчĕ çырнă. Хĕрарăм кăçалхи авăн уйăхĕн 2-мĕшĕнче упăшкине хĕненĕ.**

Хирĕçӳ сăлтавĕ – арçын çĕрулми кăларма пулăшманнипе çыхăннă. Çемьепе пĕрле пахчара ĕçлес вырăнне вăл килне каçхи 9 сехетре çеç таврăннă, тĕрĕсрех, ӳсĕрскерне юлташĕ çавăтса килнĕ. Çĕрулми кăларма хĕрарăма кӳршисем пулăшнă. Кун хыççăн вĕсем хаяррипе хăналаннă. Тарăхнă хĕрарăм упăшкине хытах чышса янă та лешĕ алăк кĕтессине пырса тăрăннă. Тĕшĕрĕлсе анnăскерне арăмĕ урипе те пырса тапнă. Кинне хунямăшĕ чарнă. Вăл ывăлне тăрса вырăн çине вырттма пулăшнă.

Хăйне япăх туйнăран тепĕр кун арçынна больницăна илсе кайнă. Унта аяк пĕрчин 6 шăмми хуçăлни, вырăн-вырăн пуçĕпе пичĕ кăвакарни палăрнă. Арçын арăмне хӳтĕлесе «лупас тăрринчен ӳкнĕ» тесе пĕлтернĕ. Анчах хĕрарăм айăпне йышăннă, ӳкĕннине пĕлтернĕ.

Чӳк уйăхĕн пуçламăшĕнче ĕçе пăхса тухма миравай судья патне янă.

**Оксана ЯСТРЕБОВА,**
**Тăвай район прокурорĕ.**

# Маттур гимнаст

Çак кунсенче Португалире Европăн спорт аэробики енĕпе иртнĕ чемпионачĕ вĕçленнĕ. Раççей пĕрлештернĕ команди йышĕнче республикăри олимп резервĕсен 6-мĕш шкулĕн воспитанникĕ Алексей Германов та пулнă.

Наци пĕрлештернĕ командин йышĕнче вăл икĕ ылтăна тивĕçме пултарнă. Раççей каччисем «Тăшă гимнастики» тата «Гимнастика платформи» дисциплинăсенче уйрăмах пысăк хака тивĕçнĕ.

# ... тата ишевçĕ

Латвири Елгава хулинче вара çак кунсенче хĕллехи ишев енĕпе Тĕнче кубокĕн I тапхăрне пĕтĕмлетнĕ. Унта Шупашкар аквайс-ишевçи Татьяна Александрова та хутшăннă.

Ентешĕмĕр 450 метр марафон дистанцине пĕрремĕш парăнтарнă. 50 метра вара виççĕмĕш ишсе тухнă.

Ăмăртăва пĕтĕмпе 18 çĕршывран 250 спортсмен хутшăннă. Кубокăн ытти тапхăрĕсем Британире, Швецире, Эстонире тата Раççейре /Тюмень/ иртĕç.

**Татьяна НАУМОВА.**

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Кино лапамĕ йыхравлать

**Марина ТУМАЛАНОВА**

**Кĕçĕн класра вĕренекен ачасемпе пĕрле "Тăван тавралăх" урокра тухса каламашкăн презентаци хатĕрлетпĕр. Вăрмана кайса килни те, уй-хирте уçăлса çӳрени те, пахчара тăрмашни те куç умне тухать. Çырла, кăмпа татнă, мăйăр пуçтарнă. Пĕчĕкскерсем йывăç хыçĕнчен мулкач тухасса е пуç çийĕн пакша сиксе иртессе кĕтнĕ. Ӳсен-тăран, чĕрчун тĕнчине тишкеретпĕр. Маншăн та мĕн чухлĕ çĕнĕлĕх уçăлать. Хăш-пĕр кайăка, тĕслĕхрен, курман, ун çинчен илтмен. Вĕçсе иртнĕ май нумайăшĕ пирĕн тăрăха канма чарăнни те кăсăклă. Интернет кашнин пирки ытларах пĕлме пулăшать. Çутçанталăк сăнӳкерчĕкĕсем те презентацие пуянлатаççĕ. Ачасем хăйсемех шыраççĕ-тĕпчеççĕ. Çакă вĕсен тавракурăмне анлăлатать.**

**Çулталăкăн кашни вăхăчĕпе киленме хăнăхнă эпир. Ылтăн кĕркунне, сăмахран, çулçă, йĕкел, хыр йĕппи пуçтаратпăр. Вĕсем вĕренекенсене ал ĕçĕ тума кирлĕ. Шухăш хăвачĕ ачасене чĕрĕпрен пуçласа крокодил таранччен ăсталама пулăшать. Кайран шкулта курав йĕркелеççĕ, пĕрпĕрин ĕçне тишкереççĕ. Ку та вĕсене çутçанталăкпа çывăхлатать, аталантарать.**

**Садра йывăç-тĕм лартса тултартăмăр та кашниех çимĕç парасса кĕтетпĕр. Çулленех турат хушăннине сăнатпăр.**

**Кĕçех сырăш çакма пуçлăпăр. Хĕлле кайăккĕшĕк хăйне апатлантарнине юратать. Шăнкăрч йăви ăсталакан та йышлă. Тĕслĕхрен, Муркаш районĕнчи Юнкă шкул ачисем ку енĕпе уйрăмах маттур. Вĕсем шăнкăрч йăвипе Сăнав участокĕсене те тивĕçтереççĕ.**

**Çакă йăлтах эпир хамăр та çутçанталăкăн пĕр пайĕ пулнине туйса илме пулăшать. Тăван тавралăха сăтăр тумалла маррине, паллах, ача та пĕчĕкренех ăнланать-пĕлет.**

**Çĕнĕ технологисен ĕмĕрĕнче тĕрлĕ темăпа кинофестиваль йĕркелесси йăлана кĕчĕ. Халăха тӳлевсĕр фильм кăтартнине ырламалла çеç. Чӳк уйăхĕн 23-мĕшĕнче пирĕн тăрăхра "Чи малтанхи Раççей" экологи фильмĕсен фестивалĕ пуçланнине палăртса хăварас килет. 5 куна тăсăлĕ вăл. Республикăн тĕп хулинчи Наци библиотекинче, Электрон тата кинодокументаци патшалăх архивĕнче, "Салют" культура керменĕнче, "Асамат кĕперĕ" культурăпа курав центрĕнче, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче тата Çĕнĕ Шупашкарти тавра пĕлӳпе истори музейĕнче, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ, Вăрмар, Муркаш районĕсенчи культурăпа кану тата вĕрентӳ учрежденийĕсенче кино курма май пулĕ.**

**Ун чухне кăçалхи кăрлачăн 23-мĕшĕнчен пуçласа нарăсăн 22-мĕшĕччен Мускаври çутçанталăк фестивалĕнче кăтартнă чи лайăх фильмсене паллаштарĕç. Вĕсем çутçанталăкпа этем çыхăнăвне сăнлаççĕ.**

**Фестиваль программи яланхи пекех пуян. Кино курнисĕр пуçне экологи экспервĕсемпе калаçма, тĕрлĕ ĕç куравне хак пама май килĕ. "Эткер" центр ача-пăча ӳкерчĕкĕсен куравне те йĕркеленĕ.**

**Мĕнех, кинофорума кайса курăпăр, фильм пăхнă май Раççейĕн тĕрлĕ регионĕнчи çутçанталăк илемĕпе киленĕпĕр.**

**Çĕршыв шайĕнче иртекен мероприятие ытларах халăха хутшăнма чĕнсе калас килет. Студентсем, шкул ачисем, вĕрентекенсем... кино лапамне çитме вăхăт тупсан мĕнешкел лайăх пулĕччĕ. Куракансен залĕ пушă пулни вара хамăра хисепленмнипе танах.**

**Унччен, чӳк уйăхĕн 16-21-мĕшĕсенче, Шупашкарти Пĕтĕм чăвашсен "Асам" I кинофестивальне çитсе курма тăрăшăр. Ăна киноискусствăри пултарулă çынсене тупса палăртас, чăваш киностудийĕн çитĕнĕвĕсемпе паллаштарас тĕллевпе йĕркелеççĕ. Унта кĕске тата тулли метражлă илемлĕ, документ тата анимаци фильмĕсем хутшăнĕç. Конкурс ĕçĕсене 14 номинаципе хаклани те искусство çыннисене хавхалантарĕ. Фильмсене Наци библиотекинче, Электрон тата кинодокументаци патшалăх архивĕнче кăтартĕç.**

**Халĕ çĕннине пĕлмешкĕн пĕтĕм услови пур. Пирĕн çакăнпа усă курма ӳркенмелле мар кăна.**

ТĔСЛĔХ ШАЙĔНЧЕ

# Çемьере çеç хăтлă та ăшă

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

**«Пирĕн…»**

Çап-çамрăклах çемье çавăрнă Сĕнтĕрвăрри каччипе хĕрĕ. Таня ун чухне 18-та пулнă. Саша вара тин çеç салтакран таврăннă. Кӳршĕллĕ çуртра пурăннă, пĕр шкулта вĕреннĕ çамрăксем малтан пĕр-пĕринпе хутшăнман-ха. Калаçма тытăнсан вара нумай та вăхăт ирттермен – пĕр тĕвве чăмăртаннă. Кăштахран Юля çуралнă. Çичĕ уйăхрах çут тĕнчене васканă вăл.

Александр Геннадьевич милицире ĕçлеме пуçланă, педагога вĕреннĕ Таня пуçламăш классемпе тăрмашнă. Юля ӳссех пынă. Çамрăк амăшĕн чĕринче çеç ача чухнехи ĕмĕчĕ сӳнмен. Ара, вăл мĕн пĕчĕкрен пысăк йыш ҫинчен шухăшланă. Тăлăхсене хăйĕн хӳттине илме те ун чухнех палăртнă.

– Эпĕ 12 çулсенче чухне Арменире çĕр чĕтреннĕччĕ. Ун пирки питĕ нумай калаçатчĕç. «Анне, кама та пулин ил-ха», – тесе йăлăнаттăм. «Вăтă ĕнтĕ эпĕ. Урăх ача илме мар, сана çын тăвасчĕ», – тетчĕ, – уççăн калаçать ăш пиллĕ хĕрарăм.

Татьяна Витальевна çемьере пĕчченех тенĕ пек ӳснĕ. Ывăлне çуратнă хыççăн чирленĕ амăшĕ. Çавăнпах е хырăм ӳкнĕ, е темиçе кунтанах вилнĕ пепкесем. Таня та ăнсăртран çеç çуралнă. Пĕчĕкскер, начарскер пурăнма вăй тупнах, майĕпен çитĕннĕ. Анчах хăйне ялан пĕччен туйнă вăл. Ара, тетĕшĕ 20 çул аслă-çке, Таня çуралсан вăл салтакра пулнă, кайран çемьеленсе Владивостокра тĕпленнĕ.

– Пĕррехинче телекуравпа пуйăсра арçын ачана тупнине пĕлтерчĕç. Чĕремре темĕн йăк! турĕ. Саша таврăнсан ăна çав ачана илме ӳкĕтлерĕм. Çамрăк ĕнтĕ – айванла шухăш: çухалнă ачана усрава илетпĕр. «Аташнă-им» терĕ-ха мăшăр, хăй вара пурпĕр шăнкăравлама кайнă. Ун чухне кĕсье телефонĕсем çук. Телеграф çеç. Тупайман хайхискерне вăл. Тепĕр тесен, çĕр çинче пĕртен-пĕр тăлăх марçке. Çакăн хыççăн мăшăра ача усрава илме ӳкĕтлеме тытăнтăм. Шупашкарта пире тин çуралнă висĕ ача сăнӳкерчĕкне кăтартрĕç. Эпĕ тӳрех пĕрне тĕллерĕм: «Саша, кур-ха, сана хывнă».

Хайхине пăхма илсе кайрĕç. Ситрĕмĕр те: пĕчĕкскер, начарскер, сарăскер камакама пулĕ те, анчах сăнӳкерчĕкри ачана пачах аса илтерместчĕ. Суда ситрĕмĕр. Тĕреклĕ хĕрарăм-судья куçлăх айĕнчен пăхрĕ: «Çамрăк та айван эсир. Ача чирлĕ пулсан мĕн тăватăр? Йывăрлăхсем сиксе тухсан? Усрава илсен вăл сирĕн пулса тăрать вĕт. Ачăрсем татах çуралĕç-ха. Нивушлĕ илетĕр?». Çирĕплететпĕр. Калаçсан-калаçсан пире Аньăна опекăна илме сĕнчĕç, – аса илет нумай ачаллă амăшĕ.

Уйăхран кăшт çеç иртнĕ Аня кунран кун илемленнĕ, чиперленнĕ. Ун пирки çамрăк мăшăр тăван-пĕтенне мар, Татьяна амăшне Анна Павловнăна та каламан малтанах. Александр амăшĕ Галина Васильевна çеç пĕлнĕ кун пирки. Çирĕп кăмăллăскер ку хыпара лăпкăн йышăннă.

– Аньăна илсе килсен анне патне хăнана эрне каймарăмăр. Хăçан та пулин пурпĕр кăтартмалла вĕт. Пахчара çĕрулми кăларатчĕ вăл ун чухне. «Пулăшма килтĕмĕр», – тетпĕр кӳмепе çитнĕскерсем. – «Маттурсем». – «Эпир пĕччен мар». – «Кам вара унта сирĕн?» – «Ача». – «Мĕнле ача?» – «Пирĕн ача». – «Аташмарăр пулĕ те?» – «Чăннипех те пирĕн, анне», – тетĕп. Вăл текех нимĕн те чĕнмерĕ. Ачасене çав тери юрататчĕ вăл. Аньăна – пушшех, – пурнăçĕнчи самантсемпе паллаштарать Татьяна.





**Ĕмĕтсене – ӳкермелле**

2002 çулта çемье Çĕрпӳве куçнă. Кил хуçи ку вăхăтра Шупашкарта çăкăр заводĕнче ĕçленĕ. Татьяна Витальевна 1-мĕш шкулта тăрăшма пикеннĕ. Часах Миша çуралнă. Унтан – Яша. Çапла Львовсем тăватă ачаллă çемье пулса тăнă.

– Яланах йĕкĕреш çуратас килетчĕ. Пирĕн йăхра пур вĕсем. Мишăна çуратнă чухне те, Яшăпа йывăрлансан та иккĕ пуласса кĕтрĕм. Çĕрпӳре йĕкĕреш чылай. Урампа пынă чухне те час-часах кураттăм çутçанталăкăн çак тĕлĕнтермĕшне. Ăмсанса пăхаттăм. Йĕкĕрешсене усрава илес тесе Интернетра та нумай шыраррăм. Пĕррехинче шкулта ачасен концертĕнче Татьяна Кузьмина директор сăмах каларĕ. Унăн пĕлтерĕшĕ çакнашкалччĕ: çынсем кăранташсем пек. Пĕрисем мăкалаççĕ, теприсем хуçăлаççĕ. Виççĕмĕшсем, никам та тытманнипе, курупкара выртаççĕ. Шĕвĕррисем вара малаллах ӳкереççĕ. Ĕмĕтри пурнăçа хамăра ӳкерме чĕнсе каларĕ вăл. Çакăн хыççăн эпир те йĕкĕрешсене – Машăпа Дашăна – «ӳкертĕмĕр», – тет хĕрарăм.

Ун чухне хĕр пĕрчисем çулталăкран кăшт çеç иртнĕ. Паллах, ӳкерчĕк хитре пулса тухнă. Анчах айккинчен пăхма çеç пĕтĕмпех йĕркеллĕ. Çывăх çыннисене ашшĕ-амăшĕн правинчен хăтарманнипе чылай йывăрлăх сиксе тухнă. Тĕрĕссипе, вĕсем халĕ те сирĕлсе пĕтмен-ха. Çавăнпах çулталăк çурă нимĕнле пособи те илмен вĕсемшĕн.

– Çăмăл ачасем мар Машăпа Даша – хăйне евĕр. Кун пирки ача çуртĕнчех асăрхаттарчĕç. Кутăнлашсан тем тусан та парăнмаççĕ. Пĕррехинче 3 кун шыв ĕçмерĕ Даша. Анчах питĕ çирĕп, чăтăмлă вĕсем, найкăшмаççĕ. Кăмăл тенĕрен, кашни ача расна. Хам çуратнисем те пĕр мар та... – сăмахлать Татьяна Витальевна.

Çакна та палăртса хăварас килет: «усрав ача» тенине Львовсем пачах ăнланмаççĕ те йышăнмаççĕ те. Вĕсемшĕн пур ача та – хăйсен. Çавăнпах Аня та кун пирки хăй 1-мĕш класа кайсан çеç ăнкарма пуçланă. Хушамачĕ раснаран. Хăй кунта чи çывăх çыннисен хушшинче пулнăран вăл та айван ыйтусем паман.

**Чăваш – чипер те пултаруллă**

Пултаруллă çемье тĕрлĕ конкурса час-часах хутшăнать. Юльăпа Аньăна та нумай конкурса илсе тухнă. Асли тăватă çултанпах сцена çинче. Халĕ ЧПУра музыка енĕпе вĕренет. Аньăпа Яша та вокал студине çӳреççĕ. Хисеп хучĕсем купи-купипех пухăннă. Кăçал та Аня акă «Çăлтăр ушкăнĕ – 2015» конкурсра икĕ кубока тивĕçнĕ. Чи пысăк парне – Аня 2012 çулта тивĕçнĕ телевизор. Козьмодемьянск хула мэрĕ хăй парнеленĕ ăна.

Кил хуçи арăмĕпе Мускаври конкурс пирки те сăмах пуçартăмăр.

– Ултă куна тăсăлнă ăмăртура пĕр-пĕринпе çывăх ларса калаçма вăхăт çитмерĕ. Ара, малтан эпир пурте пĕр-пĕринпе тупăшакансем пулнă-çке. Кашниех хăйсен пӳлĕмĕнче конкурссене хатĕрленнĕ. Юлашки кунхине, ăмăртусем вĕçленсен, тӳрех пурте калаçма тытăнтăмăр. Пирĕн кăна мар, кашнийĕнех йывăрлăхсем пулни палăрчĕ. Çиелтен пăхма çеç пĕтĕмпех йĕркеллĕ вĕт. Шалта вара татса памалли ыйтупа йывăрлăх темĕн чухлех. Пирĕн те çаплах. Акă, Машăпа Даша та малтанах çывăрма выртттарсан йăркаланатчĕç кăна. Пĕр минутра миçе çавăрнатчĕç-ши хăйсен тавра? Кăкăр çумне илни – усăсăр. Вĕсем кун пеккине хăнăхман. Калаçма пуçласан кунашкал йывăрлăхсем пирĕн кăна мар, ыттисен те пулни палăрчĕ. Маша тăватă çулта пулин те тепĕр чухне вырăн йĕпетет. Хăшĕсен ку 9 çулчченех те тăсăлать иккен. Çак ыйтусем тавра ларса калаçма пулмарĕ. Халĕ чылайăшĕпе Интернет урлă çыру çӳрететпĕр, – каласа кăтартмалли темĕн чухлех хĕрарăмăн.

85 çемьерен суйланнă 15 çемье хутшăннă конкурса. Паллах, кашниех вĕсем ыттисенчен уйрăлса тăнине, çĕнтерме пултарнине туйнă, шаннă.

– «Çĕнтеретпĕрех» шанăçпа кайман-ха конкурса. Анчах чун тĕпĕнче республика валли 1-мĕш вырăнах йышăнас килетчĕ. Ачасемпе те тĕрлĕ конкурса чылай тухса çӳренĕ май ытти регион çыннисем: «Мĕншĕн кун пек эсир?» – тесе тĕлĕнеççĕ. Вĕсен шухăшĕпе, пирĕн хĕсĕк куçлă, хура ӳтлĕ пулмалла. Чăвашсем пултаруллă та хастар, ырă та уçă кăмăллă, чипер те илемлĕ пулнине кăтартас килетчĕ, – пăшăрханать маттурскер.

**Висĕреш**

Конкурсра тĕрлĕ енлĕ ăмăртма тивнĕ. Çав вăхăтрах алă ĕçĕсен куравĕ те пулнă. Львовсем унта тĕрлĕ чĕрчун çемйине ăсталаса кайнă. Чи варринче вара Мамонтенок ларнă. Мультфильмри ку сăнара, амăшне шыраканскерне, кашниех паллать ĕнтĕ. Ăна хатĕрленĕ чухне йĕкĕрешсем ку кам пуласси пирки кăсăкланса ыйтусемпе халран янă. Машăпа Дашăна унпа паллаштарма мультфильм кăтартнă. Амăшне сухатнă çурана вĕсем те хĕрхенсе пăхнă. Даша: «Амăшне сухатнă вăл. Амăшне шырать», – тесе куççульленнĕ те.

Çапла, пурне те анне, çемье кирлĕ. Ырăлăхпа ăшăлăхра пурăнма çеç хăтлă. Тĕрĕссипе, Львовсен çемйи тата пысăкрах-ха. Ултă ачасăр пуçне вĕсен йытă та, пилĕк кушак та пур. Кашниех – çемье пайĕ. Лиза йытă вара ку çемьене йĕкĕрешсемпе пĕрле килнĕ. Çавăнпах хăйсем хушшинче вĕсене висĕреш тесе те чĕнеççĕ.

**Чĕвĕлти пуканесем**

Татьянăпа Александр пĕрлешни çак эрнере шăп та лăп 20 çул çитнĕ.

– Кун пек арçынпа ултă ача çеç мар, ытларах та ӳстерме пулать, – тет хĕрарăм хунямăшне лайăх упăшка парнеленĕшĕн тав туса.

Мăшăр килĕштерни, пĕр-пĕрне çур сăмахранах ăнланни пĕрре курсах палăрать. Ахальтен-и, вĕсем йыш хушасси пирки шухăшлаççĕ.

– Ултă ача – нумай мар, кунпа çеç çырлахмăпăр, – пĕр харăссăн пĕлтереççĕ аслисем.

– Маншăн телей – çемье. Çавăнпах пурне те хăтлă та канлĕ пултăр тесе тăрăшатăп та. Кашнин ыйтăвне-пăтăрмахне чун çывăхне илетĕп. Тĕп тĕллев – чăн-чăн çемье пуласси. Мускавра пăхрăм та: хăшĕ-пĕри чăнласах та çемье, теприсем вара – усрав çемье. Ача мана чуна пымасан ăна йышăнаймăп. Чĕреме тыткăнланине, çывăххине çеç илейĕп, – ăшри туйăмне пытармарĕ Татьяна.

Татьяна НАУМОВА.



ÇЫН ТĂК ÇЫН

# Çĕнĕрен чĕрĕлнĕн туйăнать...

Таяпа Энтри çамрăкĕсем кашни каç ялти кĕпер çине пуçтарăннă, магнитофонпа юрă-кĕвĕ ярса ташланă. Çĕнĕ Çул уявне те пĕр çулхине урамрах ирттернĕ хайхисем. Шăнса кайнă пулин те хăйсем савăнăçлă, чăрăш тавра сикеççĕ кăна.

− Маххă пама хăнăхман çав пирĕн тăрăхрисем, − каласа кăтартать Валерий Алексеевич.

Çын хуйхи-суйхине, пăшăрханăвне чĕри патне илме хăнăхнă Валерий Шадриков ял çамрăкĕсене пулăшма тĕв тунă. Чăн та, ялта клуб та пулмасан çамрăксен вăхăта епле ирттермелле-ха? Чылай вăхăт Елчĕкри МСОра мастер-прорабра, райпора директорăн строительство енĕпе ĕçлекен çумĕнче, кайран ялта колхоз председателĕнче тăрăшнăскер хăй тивĕçлĕ канурине пăхмасăрах тĕллевне пурнăçа кĕртме тăрăшнă. Шăпах Кĕçĕн Таяпа ял тăрăхĕ «Комплекслă строительство» республика программин конкурсĕнче çĕнтернĕ çав вăхăтра. Культура çуртне юсама республика хысниччен тата вырăнти ял тăрăхĕ укçа-тенкĕ уйăрнă. Юрăхсăр çуртсен шутне кĕртнĕ клубăн маччи те пулман малтан. Йĕпе-сапа вăхăтĕнче стена тăрăх шăпăртатсах шыв юхнă. Клуба çĕнĕрен чĕртсе тăратас тесе ялĕпех нимене тухнă. Тахçан Елчĕкри МСОра ĕçленĕ Таяпа Энтри хĕрарăмĕсем стенасене тӳлевсĕрех якатса панă. Ватăсем те айккинче тăрса юлман, вĕсем валли те кулленех ĕç тупăннă. Çак ялта çуралса ӳснĕ Александр Романов уйăрнă укçа-тенкĕпе клуб тавра хитре карта тытса çавăрнă.

− Ывăл Алексей концертпа килчĕ яла. Пĕр пус та илмерĕ, пухăннă укçине пĕтĕмпех культура çурчĕ валли парса хăварчĕ, − каласа кăтартать Валерий Шадриков.

Ăшă та, çутă та, хăтлă та халь Таяпа Энтринчи культура çуртĕнче. Кĕçех тĕслĕх библиотекăна та шкултан ялти клуба куçарĕç. «Халь клуба кĕрес килсе тăрать пирĕн, ял çĕнĕрен чĕрĕлнĕн туйăнать», − теççĕ ялти ватăсем.

Кĕске хушăра пĕчĕк ансамбль те йĕркеленнĕ Таяпа Энтринче, ушкăн хăйсен укçипе хитре кĕпесем çĕлеттернĕ. Шкул ачисем уроксем вĕçленнĕ хыççăн клуба ташă кружокне çӳреççĕ. Халĕ ялти культура çуртĕнче Амăшĕн кунне хатĕрленеççĕ. Ваттисен кунĕнче 45 çын таранах пуçтарăннă клуба. Кĕрхи бал та хаваслă иртнĕ.

Валерий Шадриков тахçантанпах «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçатпа туслă. Пĕрре мар, темиçе çырăнать ăна кашнинчех. Чи малтан юратнă арăмне, кайран ăш пиллĕ хунямăшне хаçатпа туслаштарать. Таяпа Энтринчи лавккара тăрăшакан мăшăрне, Людмила Александровнăна, ырă та ăшă кăмăлĕшĕн, тараватлăхĕшĕн хисеплеççĕ ялтисем.

− Культура çуртне йĕркене кĕртсенех ĕçлеме пăрахатăп тенĕччĕ. Акă халь унтанпа тăватă çул та иртсе кайрĕ. Мана, пенсири çынна, килте ларсан та юрать-ха, − пăлăртать Валерий Алексеевич.

Культура çурчĕн пуçлăхне Зоя Зайцева тирпейлӳçĕ нумай пулăшса пырать. Пур уява-концерта та пĕрле хатĕрленеççĕ вĕсем..

− Культура тытăмĕнче нихăçан та ĕçлемен эпĕ. Ялти клубăн чи пĕлтерĕшлĕ тĕллевĕсенчен пĕри вăл − çамрăк ăру кун-çулне çутă та пуян, интереслĕ йĕркелеме пулăшасси, çавăн пекех йăла-йĕркене, культурăна, аваллăха упраса хăварасси, − тет Валерий Алексеевич. Ман шухăшпа, Турă пани, чунра хăйне майлă хăват, халăхшăн çунни пур унра.

Çамрăксемпе, ватти-вĕттипе, ял халăхĕпе пĕр чĕлхе тупма пĕлет Валерий Шадриков. Культура вучахĕ ан сӳнтĕр тесе мĕнпур вăй-халне, чун хăватне парса тăрăшать.

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.



**Çĕрпӳри илтменнисен тата япăх илтекенсен 1-мĕш интернат шкулĕн 6-мĕш класĕнче вĕренекен Амина Александрова − нумай конкурс, ăмăрту, олимпиада çĕнтерӳçи. Кашни предмета «5»-лĕх пĕлет. Явапласкерне класс старостине суйланă. Япăх илтни те пурнăç илемĕпе туллин киленме чăрмантармасть ăна. Юлташĕсем те унăн шухăшĕпе сĕнĕвне мала хураççĕ. Амина кашнинех пулăшма ăнтăлать. «Калаçнă май хĕрача пурнăçа мĕнешкел хытă юратнине ăнланса илтĕм.**



# Амăшĕн хăвачĕ

### Ырра шанни

Амина 6 уйăхрах тата çав тери хавшак çуралнине ĕненес те килмест. 1,5 килограмм та таяйман пепке хăçан та пулин вăй илесси тухтăрсене те иккĕлентернĕ. Амăшĕ вара самантлăха та шанăçне çухатман. «Пĕрре ача çуратмалли çуртра 5 сехетре вăрантăм та инкубатор еннелле васкасах утрăм. Медсестра тĕлĕрсе кайнăччĕ. Пăхатăп та − манăн тĕпренчĕк кăнкăвак выртать. Чĕре ĕçленине кăтартакан аппаратура тӳрĕ йĕр ӳкерет. Мĕн тумалла кун пек чухне? Медсестрана пырса тĕкрĕм... Вăл сиксе тăрса ачана çийĕнчех силлерĕ. Çакăн хыççăн пĕчĕкскере сăн кĕме пуçларĕ, унăн пичĕ хĕрелчĕ», − аса илет Алена Анатольевна. Кайран та нумай пăшăрханнă, куççуль юхтарнă хĕрарăм. Çапах Амина сывланăшăн, куллен 5-шер грамм хушăннăшăн савăнма вĕренсе çитнĕ вăл. Тата çак тĕнчене васкаса килнĕ хĕр пĕрчи хăйĕн вырăнне тупасса хытă ĕненнĕ. Тен çав хăватах вилĕме çĕнтерме пулăшнă тĕпренчĕкне?

Халĕ 13-ри хĕрача ăс-тăнĕпе, пултарулăхĕпе, çаврăнăçулăхĕпе сывăх çыннисене кăна мар, вĕрентекенĕсене те тĕлĕнтерет. Пĕлтĕр, сăмахран, Амина Александрова Пĕтĕм Раççейри «Пĕлӳ çăлкуçĕ» олимпиадăра çĕнтернĕ. Ăна коррекци шкулĕнчи вĕрентекенсем пуçарса янă. Сăмах май, 2014 çулта ку ĕçе 42 шкулти 1500 ача хутшăннă. Амина пĕрремĕш вырăн йышăнни, паллах − Çĕрпӳ шкулĕшĕн пысăк çитĕнӳ. 6-мĕш класс вĕренекенĕ кăçал та çак олимпиадăра хăйĕн пĕлĕвне тĕрĕслесшĕн. Эх, хатĕрленет ытларах пĕлессишĕн çунаканскер! Учительсем каланă тăрăх − ыйтăвĕсем пĕрре те çăмăл мар, патшалăхăн пĕрлехи экзаменне аса илтереççĕ. Ытларах вулама, тишкерме Аминăна вĕрентекенсем те, çывăх çыннисем те пулăшса пыраççĕ.

### Юрату сăмахĕсем

Аминăн ашшĕ − таджик, амăшĕ − чăваш. Халĕ вĕсем пĕрле пурăнмаççĕ. Кил хуçи арăмĕ урăххипе телей тупнă. «Эпĕ сана юрататăп», − тени килĕшет. Килте виçĕ çак сăмахпа тăтăшах усă куратпăр», − пытармасть хĕрача. Вĕсен çемйи туслă. Амина аппăшне евĕрлеме тăрăшать. Аиша спорт енĕпе Раççей ăмăртăвĕсенче çĕнтерни ăна та хавхалантарать. Алишер бокс секцине сиктермест. Сережа та пиччĕшĕпе аппăшĕсенчен юласшăн мар.

«Амина 4 çултанпах Галина Иванова сурдолог-оториноларинголог патĕнче тĕрĕсленет, сипленет. Вăл хытă сасăсене /д, б, р/ лайăх илтет. Чейник хăлха çураслa шăхăрнине е машина кăшкăртнине хĕрĕм уйăрса илеймест. Çавăнпах хăлха аппарачĕпе çӳрет», − ăнлантарать Алена Анатольевна. Амăшĕ те хĕрĕ вулама юратнине, тирпейилеме хаклама пĕлнине пăлăртать. Аминăшăнах килте телевизор сассине пысăклатнине те хăнăхнă вĕсем. Çакă никама та кансĕрлемест.

Нумай ачаллă çемьене Çĕрпӳре çĕр панă. Унта çурт лартма вăй çитернĕ вĕсем. Халĕ пӳлĕмсене хăтлăлатаççĕ.

### Мультфильм ӳкересшĕн

«Тен, дизайнер пулăп. Манăн аннене хитре çи-пуç çĕлесе тăхăнтартас килет. Экскизĕсем хатĕр ĕнтĕ», − тет Амина. Вăл ӳкерме ăста. Акă Нарспи мĕнле ăнăçлă пулса тухнă. Ытти ĕçĕсенче те шухăш хăвачĕ иксĕлми. Çакна жюри членĕсем те асăрхамасăр иртмеççĕ.

«Ачасем çĕннине пĕлесшĕн, çавăнпах вĕсемшĕн çĕнĕ ĕçе пуçăнас килет», − калаçăва хутшăнать Марина Петрова вĕрентекен. Вĕсем ӳнер кружокĕнче кăранташпа, сăрăпа усă курнисĕр пуçне видео, сăн ӳкереççĕ. Ачасен видеороликĕсене ашшĕ-амăшĕ ырласа йышăнать. Ун урлă интернат шкулăн пурнăçĕ алă тупанĕ çинчи пекех курăнни паллă. Çитес вăхăтра пултарулă çак ушкăн мультфильм ӳкерме пуçласшăн. Малтанлăха палăртнă тăрăх, унта чĕрчунсене «сăмах парасшăн». Тĕллев тытрĕç пулсан − пурнăçласçех.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



### Кăлпассипе хăяр салачĕ

**100 грамм ветчина, тĕтĕмленĕ 100 грамм кăлпасси, маринадланă 2 хăяр, 1 пылак пăрăç, консервланă 1/2 банка симĕс пăрça, симĕс сухан, майонез, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Пĕрчĕлесе туранă çимĕçсене симĕс суханпа, майонезпа пăтратмалла, тăвар, пăрăç хушмалла. Сĕтел çине лартиччен вĕтетнĕ симĕс сухан сапмалла. Салата 2 апат кашăкĕ тип çу, 1 чей кашăкĕ сар пăрăç, 1 апат кашăкĕ лимон сĕткенĕ хутăшĕпе те пăтратма юрать.

### Тăпăрч çаврашки

**250 грамм тăпăрч, 2 апат кашăкĕ çăнăх, 1 çăмарта, 2 апат кашăкĕ сахăр, 2 панулми, 1 апат кашăкĕ исĕм, чĕптĕм тăвар, ванилин, вĕтетнĕ сухари, тип çу кирлĕ.**

Çăмартана сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла, тăпăрч, тăвар, ванилин, çăнăх хушмалла. Панулмие вĕттĕн турамалла, исĕме шӳтермелле. Тăпăрч чустине панулми, исĕм ямалла. Çак хутăшран çаврашкасем тумалла. Кашнине çăнăхпа тата сухарипе йăваламалла. Тăпăрч çаврашкисене тип çупа ăшаламалла.

### Çĕрулми хăпартăвĕ

**7-10 çĕрулми, 500 грамм какай фаршĕ, 200-шер грамм майонезпа хăйма, пуçлă 2 сухан, 200 грамм сыр, 1 апат кашăкĕ услам çу, тип çу, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Пĕçернĕ çĕрулмие тӳмелле, услам çу хушмалла. Сыра теркăламалла. Вĕтетнĕ сухана тип çупа ăшаламалла, фарш хушмалла, тăварпа пăрăç сапмалла. Тип çу сĕрнĕ çатмана сийлесе /нимĕрĕн çур пайĕ – хăйма – фаршпа сухан – нимĕрĕн çур пайĕ – майонез – сыр/ хăпартмалла. Çĕрулми хăпартăвне духовкăра 40 минут пĕçермелле.

### Торт

**Чуста çăрма 1 банка çăратнă сĕт, 1 çăмарта, 500 грамм çăнăх, ванилин, 1 чей кашăкĕ апат соди кирлĕ.**

**Крем валли 500 грамм сĕт, 2 çăмарта, 1 стакан сахăр, 3-4 апат кашăкĕ çăнăх, 200 грамм услам çу хатĕрлемелле.**

**Илемлетме улма-çырла кирлĕ.**

Çăратнă сĕте çăмартапа, ванилинпа, апат содипе пăтратмалла. Çăнăх хушса чуста çăрмалла. Ăна 5-6 пая уйăрмалла. Çӳхе йĕтĕрлесе типĕ çатмара ăшаламалла.

Çăмартана сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла. Вĕрекен сĕте çăмартапа сахăр хутăшĕ, çăнăх хушмалла. Ăна çăраличчен пĕçермелле. Сивĕнсен услам çу ярса миксерпа пăтратмалла.

Икерчĕсен хушшине, айккине тата çиеле крем сĕрмелле. Торта улма-çырлапа илемлетмелле.

### Сыр кукăлĕ

**200 грамм хытă сыр, 2 çăмарта, 100 грамм çăнăх, 50 грамм услам çу, 50 грамм хăйма, 1 чей кашăкĕ апат соди кирлĕ.**

Теркăланă сыра çемçе услам çупа пăтратмалла. Çăмартана хăймапа хутăштармалла. Сырпа çăмарта хутăшне пĕр савăта ямалла, çăнăх, апат соди хушмалла. Чустана çатмана хумалла. Сыр кукăльне духовкăра 50 минут пĕçермелле.

### Шарлотка

**6 çăмарта, 1 стакан сахăр, 1,5 стакан çăнăх, 4-5 банан, 1 чей кашăкĕ апат соди, ванилин, тип çу, сахăр çăнăхĕ кирлĕ.**

Çăмартана сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла, апат соди, ванилин, çăнăх хушмалла. Çаврашкан туранă банана чустана ямалла. Çак хутăша тип çу сĕрнĕ çатмана куçармалла. Хатĕр шарлоткăна сахăр çăнăхĕпе витмелле.

### Апельсинпа тăпăрч

**4 апельсин, 200 грамм тăпăрч, 80 грамм сахăр, 30 грамм аçтăрхан мăйăрĕ, 100 грамм мармелад кирлĕ.**

Апельсина çурмалла касмалла. Ăшне кашăкпа кăларса вĕтетмелле. Блендерпа пăтратнă тăпăрча апельсинпа, сахăрпа, аçтăрхан мăйăрĕпе хутăштармалла. Çак крема апельсин хуппинчен тунă чашăка ямалла. Çиелтен мармеладпа илемлетмелле.

## КАЙĂК-КĔШĔК

# Африка чăххи

**Çитес çуркунне цесарка туянас шухăш пур. Ăна усрама йывăр мар-ши? Çăмарта тăваççĕши?**

**Валентина П.**
Муркаш районĕ.

Цесарка /ăна тепĕр майлă Африка чăххи теççĕ/ шăрăха та, сивве те чăтăмлă. Вăл картари ытти кайăкпа çапăçмасть, хăвăрт чупать, вĕçме те хăтланать. Çавăнпа та унăн çунатне касаççĕ.

Цесаркăна пысăк пахалăхлă çусăр какайшăн усраççĕ. Унăн ашĕ килти ытти кайăк-кĕшĕкĕннинчен чи лайăххи шутланать. Африка чăххи çăмарти те тутлă. Хуппи хулăн пулнăран чылай вăхăт, 0-10 градусра çур çул таранах, упранать.



Ӳссе çитнĕ кайăк 1,5-1,8 килограмм таять. Çу каçипе 60-120 çăмарта тăвать. Çăмарти чăххăннинчен пĕчĕкрех пулин те, калори енчен чухăн мар: А, Д, Е, В витаминсем унра икĕ хут ытларах.

Африка чăххине усрама тупăшлă çеç мар, ансат та. Ун валли ятарлă услови кирлĕ мар, ыттисемпе пĕр картарах лайăх пурăнать вăл. Цесарка çав тери хăравçă кайăк.

Кун тăршшĕ вăрăмлансан çичĕ уйăха çитнĕ кайăк çăмарта тума тытăнать, анчах вăл пурăнакан вырăн 14-16 градусран кая мар ăшă пулмалла. Çак тапхăрта ама аçаран тĕреклĕрех курăнать. Çуркунне кайăка ытларах тымар çимĕç /кăшман, кишĕр/, ешĕл курăк параççĕ. Хĕлле тата çуркунне ятарлă витамин препарачĕ ытлашши пулмĕ.

Кайăк-кĕшĕке хĕл каçармалли вырăн ăшă пулмалла, урайне 10-15 сантиметр хулăнăш ай сарăмпа /йывăç кĕрпи, улăм, торф, хăйăр/ витеççĕ. Цесарка сивве чăтăмлă пулин те витĕр çил уншăн сиенлĕ. Чăхсем валли 40-45 сантиметр çӳллĕшĕнче 4-5 сантиметр кашта çакаççĕ. Пĕр тăваткал метр урайĕнче пилĕк чăхран ытла вырнаçаймĕ.

Цесаркăна икĕ çултан ытла усрамалла мар, çăмарта тума пăрахсанах пусмалла.

Африка чăххине суйланă чухне çакна та шута илмелле: çăмарта лайăх параканнисен тĕкĕ каярах тăкăнать, çĕнни маларах шăтса тухать. Тăватă ама пуçне пĕр аçа кирлĕ.

## СЫВЛĂХ

# Хăлха, пыр, сăмса...

Хăть те мĕнле чирĕн те малтанхи паллисем пур. Вĕсене уйăрса чире шала ямасăр тӳрех сипленме пуçламалла.

РИНИТ. Хăть те мĕнле ОРВИ те организма вирус çакланнинчен пуçланать. Çын сунаслама тытăнать, сăмсаран тĕссĕр йăлмака тухать.

Бактерисем ытларах чухне чирлĕ çынран куçса сăмсана лекеççĕ. Кун пек чухне унăн ăш-чикки те пăсăлать, манка саралать е симĕсленет.



Тепĕр чухне сăмсана лекнĕ бактерисем унта темччен пурăнаççĕ – хăйсем пирки пач систермеççĕ те, асаплантармаççĕ те. Шăнсан, пăшăрхансан, иммунитет хавшасан, чирлĕ çынпа хутшăнсан вара чире куçма пултараççĕ.

Сунасласси аллергипе те çыхăнма пултарать. Тепĕр чухне тĕрлĕ шăршă, чечек шăрки, тирек мамăкĕ, тусан, тĕрлĕ апат-çимĕç организма "вĕчĕрхентерет". Кун пек чухне те сăмса питĕрĕнет, сунаслаттарать.

Кашни тĕслĕхрех сунаса тĕрлĕ майпа сиплемелле. Анчах пур чухне те сăмсана тăвар шывĕпе çуни пулăшĕ. Вăл питĕрĕннине те уçать, бактерисемпе вируссене те çуса кăларать.

Енчен те сунас 3 кун таран иртмест е лайăххани сисĕнмест пулсан тухтăр патне каймах тивет.

ОТИТ – хăлхан тĕрлĕ пайĕ шыçăнни, пăсăлни. Кун пек чухне вăл ыратма, юхма тытăнать, тепĕр чухне илтми те пулать. Тĕп сăлтавĕ – инфекци çакланнинче. Çавăнпах бактерисене вĕлерекен эмел ĕçмелле.

Енчен те отит йывăрлăхсăр иртет пулсан ăна сиплеме халăх мелĕсемпе те усă курма юрать. Анчах та малтан тухтăрпа канашламалла.

Суханпа çу. Хăлха пӳрленсе юхсан услам е кантăр çăвĕпе хутăштарнă сухан сĕткенĕ пулăшĕ. Мамăка тин хатĕрленĕ шĕвекре йĕпетмелле те хăлхана чикмелле.

Салтак тӳмин шывĕпе чӳхени те шыçăннă хăлхана сыватма пулăшать. 1 стакан вĕри шыва 1 чей кашăкĕ чечек ямалла. Енчен те ыратни иртмесен тухтăр патне каймалла, унсăрăн чир шала кайĕ.

ФАРИНГИТ асаплантарнă чухне пыр ыратать. Енчен те ку чир вăраха кайнисен йышĕнчен пулсан кĕлетке вĕриленмест. Пыр типсе тăни канăçсăрлантарнăран типĕ ӳслĕк аптратать.

ЛАРИНГИТ чухне пыр типет, кăтăкланать, сурчăк çăтнă чухне ыратать çеç мар, сасă та çухалать. Ку чир шăннипе, чĕлĕм туртнипе, вăйлă кăшкăрнипе сăлтавланма пултарать. Кун пек чухне тухтăрсем сахалрах калаçма, нумайрах шĕвек ĕçме сĕнеççĕ.

## ...пуç ыратсан

Эмелсĕр те сипленме пулать. Вырăн çине выртиччен купăста çулçине тăнлав, çамка, ĕнсе çине хурса пуçа тутăр çыхмалла. Телевизорпа телефона сӳнтермелле. Ним пирки те пăшăрханмалла мар, канлĕ çывăрма тăрăшмалла.

## Тимре ерсен

Йытă-кушакран тимре ерме пултарать. Ун пек чухне пĕр стакан хуратул кĕрпине шывра пĕçермелле. Сарăлса çитсен çулăма сӳнтермелле. Йӳçиччен ăна савăтрах тытмалла. Унтан ăна сиенленнĕ вырăна эрнере 2-3 хут сĕрмелле.

*Халăх мелĕпе усă куриччен тухтăрпа канашламалла.*

## ТĔКĔР УМĔНЧЕ

## Хăйма çамрăклатать

Ку маска пите нӳретет, шуратать, пĕркеленчĕксене пĕтерет. 1 стакан çуллă турăха е хăймана 15-20 минут хушшинче пите темиçе хут сĕрмелле. Унтан ăна ăшă шывпа çумалла.

## Çӳçе çирĕплетме

2 чей кашăкĕ лимон сĕткенне вĕретсе сивĕтнĕ 1/2 стакан шывпа пăтратмалла. 1 чей кашăкĕ глицерин, 3 чей кашăкĕ одеколон е духи хушмалла. Çак бальзама таса çӳçе сĕрмелле.

АХ, АНЧАХ...

# Ан ман мана

Вăрçă çулĕсенче районти кашни колхозах вăрман касма план панă. Пирĕн ялсем Йĕпреç тăрăхне çӳретчĕç. 1944 çулхи кăрлач уйăхĕнче пире, 16-17-ри çамрăксене, пĕр хĕрарăм-повара, тата сусăр бригадира Йĕпреç тăрăхĕнчи Пăва çумĕнчи вăрмана ĕçлеме ăсатрĕç. Ялтан тăватă лавпа кайрăмăр. Поселока çитсен пĕр пысăк барака вырнаçрăмăр. Çамрăксене колхоз бригадирĕ висĕ ушкăна уйăрчĕ. Пирĕн йышра – Гриша, Павлик, эпĕ, Виталий, Лена /Архипова/. Хĕр йывăç турачĕсене иртет.

Тимĕр кăмака çĕрĕн-кунĕн çунса тăрать пулин те пысăк барака ăшăтса çитереймест. Унта эпир вăтăр çын ытла пурăнатпăр.

Тăваттăмĕш кунхине вăрман касма кайнă чухне Лена хыça юлнине сисмен те. Чун чăтмарĕ, вăл мĕншĕн чарăннине пĕлмешкĕн çаврăнса утрăм.

Ленăн тула тухас килнĕ. Алă пӳрнисем шăнса кӳтнĕрен йĕм кантрине ниепле те салтса яма пултарайман. «Лена, ан вăтан», – терĕм. Алсана хывса айккине хутăм та ăна пулăшрăм. Çакăншăн мана тав турĕ хĕр. Кайран хамăн алсише Ленăна тăхăнтартрăм.

Пăва поселокĕнчи вăрман хуçалăхĕн баракĕнче эпир висĕ эрне ытла пурăнтăмăр. Çав вăхăтра çири тумтире хывса курман, çăматăсене урай варринче ларакан тимĕр кăмака çумĕнче черетпе ăшăтса илеттĕмĕр те каллех урана тăхăнса выртаттăмăр. Матрас вырăнне утă-улăм сараттăмăр. Плана пурнăçласан тин яла таврăнтăмăр.

Лена мана хăйсем патне кĕрсе тухма сĕнсен тӳрех килĕшрĕм. Унăн амăшĕ Матрӳне аппа çав кун пире кĕтмен. Вăл хĕрне ыталаса илчĕ. Лена тумтире алăк патне çакрĕ, мана урай варринчи пукан çине ларма сĕнчĕ.

– Анне, эпĕ Виталие юрататăп, çак туйăм – ĕмĕрлĕхе, – терĕ те мана аллипе пуçран тытса питрен чуп туса илчĕ.

Киле кайма пуçтарăнсан Матрӳне аппа мунча кĕме чĕнчĕ. Манăн, паллах, хăвăртрах çăвăнса тасалас килчĕ.

Хамăр хапха тĕлне çитсен /тăватă кил урлă пурăнаттăмăр/ пăхатăп – картишне кĕме çул çук, юр хӳсе лартнă. Мана курсан Анна йăмăкăм: «Анне, анне, пичче килчĕ», – терĕ. Тĕнчери чи çывăх çыннăм çав вăхăтра чăланта кăмака умĕнче тем ĕçлетчĕ. Аннеçĕм савăнчĕ. «Эх, ывăлăм, ывăлăм...» – ачашласа пуç тӳпинчен чуп туса илчĕ. Тумтире хывса çакма та пулăшрĕ. Кăшт калаçса ларнă хыççăн юр тасатса çул усрăм.

Таса кĕпе-йĕме тутăрпа çыхса Лена патне васкарăм. «Мунча паçăрах пулнă, мĕншĕн час килмерĕн?» – кăсăкланчĕ Матрӳне аппа. Ленăпа пĕрлех çăвăнтăмăр, анчах айкашман. Мунчаран тухсан савниçĕм иксĕмĕрен таса мар кĕпе-йĕме пуçтарса хучĕ, хăех çума шантарчĕ.

Пӳрте те пĕрлех кĕтĕмĕр. Лена алăран тытсах сĕтел хушшине лартрĕ. Хăй те мана хирĕç вырнаçрĕ. Пăхса тăранаймастăп – мĕнле хитре-çке вăл.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, Матрӳн аппа сысна салипе ăшаланă çĕрулми пырса лартрĕ.

– Лена, эсĕ Виталие хăна ту, ĕçтер, çитер, – тесе мунчана çăвăнма тухса кайрĕ хĕрарăм. Амăшĕ кайсан Ленăна ыталарăм. Вăл та пуçне ман кăкăр çине хучĕ. Ах, мĕнле асамлă юрату хăвачĕ!

Тепĕр кун Лена кăнтăрла тĕлнелле çуса тасатнă çи-пуçа тутăрпа чĕркесе илсе килчĕ. Çавăншăн Ленăна тав турăм, анне те ăна килĕштерчĕ.

Çакăн хыççăн каçсерен Ленăпа тĕл пулма пуçларăмăр. «Ан ман мана», – тесе уйрăлаттăмăр.

Пĕрремĕш юрату çав тери черчен, çепĕç, таса, илемлĕ, асамлă, чĕрере тарăн йĕр хăвараканскер. Паллах, Ленăпа юнашар пулма ĕмĕтленнĕ ун чухне.



Мухтанса каламастăп, çамрăк чухне эпĕ маттур та хастар, илĕртӳллĕ пулнă, ялти чылай хĕр чĕрине çунтарнă. Вĕсенчен чи-чи илемлине, ĕçченнине, ăшă кăмăллине – Ленăна – суйласа илтĕм.

Вăрнарти ял хуçалăх шкулĕнче вĕреннĕ чухне те унпа калаçас тесех тăван яла тăтăш килеттĕм. Лена çинчен пĕр вĕçĕм шухăшлаттăм. Ирхине вăрансан та, апатланнă чухне те, вак-тĕвек ĕç пурнăçланă вăхăтра та вăл куç умĕнче тăратчĕ. Анчах иксĕмĕрĕн те ясар шухăш пулман.

Агрономра висĕ çул ĕçлесен, 1950 çулхи ака уйăхĕнче, районти çар комиссариатĕнчен хут килчĕ. Ыран çара каяс тенĕ кун эпир Ленăпа сак çинче чылай калаçса лартăмăр. Уйрăлас умĕн савниçĕм мана кĕтсе илме шантарчĕ, питрен хыттăн чуп туса илчĕ.

Çав каç Лена çĕрĕпех çывăрман, мана валли алшăллипе сăмса тутри тĕрленĕ. Ирхине тăванпĕлĕш пуçтарăнчĕ, хамăр урамри хĕрсемпе каччăсем пычĕç, унтан Макçăм мучипе Коля купăççă çитрĕç.

«Ку сана асăнмалăх парне, пире ан ман», – терĕç хăнасем ман хулпуççинчен алшăлли çакса. Эпир пĕр çаврăм юрă пуçларăмăр. Унтан тăрантас çине ларса урам тăрăх юрă янратса, тутăр вĕçтерсе çӳрерĕмĕр. Сывпуллашма вăхăт çитсен Ленăн куçĕ шывланчĕ. «Виталий, ан ман мана, çыру яр, эпĕ те сана асран кăлармăп», – терĕ кăшт вăтанса.

Пӳртрен тухсан çуранах ял вĕçне утрăмăр. Ăсатма пынă çынсемпе уйрăлнă вăхăтра Лена ман пата чупса пычĕ те сăмса тутри тыттарчĕ.

Канаша вăхăтра çитрĕмĕр. Чукун çул станцийĕнче тавар турттаракан икĕ вакуна вырнаçса çула тухрăмăр. Кантăксăр вакунран нимĕн те курайманстпăр, ăçта, мĕнле хулана илсе кайнине те пĕлместпĕр. «Çитсен куратăр», – тетчĕç пире илме килнĕ сержантсем. Висĕ талăк ытла кайрăмăр çав пуйăспа.

Чаçе çитсен висĕ хутлă казармăн аялти хутĕнчи урайне выртарчĕç. Ирхине мунчана илсе кайрĕç. Кайран салтак тумĕ тăхăнтартрĕç, столовăйра апат çитерчĕç. Çав каç казармăн виççĕмĕш хутĕнче пĕр пӳлĕм уйăрчĕç пире валли. Çыру çӳретме адрес пачĕç. Эстонири Вильянди хулине çитнĕ-мĕн. Эпĕ гварди артиллери полкĕнчи штаб çыравçи пулса тăтăм.

Лена ялти хыпарсене пĕлтерсех тăчĕ, вĕри туйăмне те пытармарĕ. Хушнă ĕçе тĕплĕ те вăхăтра пурнăçланăшăн мана кĕçĕн сержант звани тата киле кайма отпуск пачĕç. Яла Кăшарни кунĕнче ирхине çитрĕм. Каç пулсан савни патне вĕçтертĕм. Кĕтмен çĕртен пырса кĕнине курсан Лена мĕнле савăнчĕ, вĕçсе кайманни çеç. Чупса пырса икĕ аллипе мăйран уртăнчĕ.

Çав каç эпĕ киле каймарăм, савни патĕнче çĕр каçрăм. Унпа юнашар çывăртăмăр. Вунă кун сисмесĕрех иртсе кайрĕ. Мана ăсатса яма Канаша та пычĕ Лена. «Витали, юрататăп, кĕтетĕп сана», – куççульленĕ уйрăлнă чухне. Ун хыççăн çулталăк иртсен эпĕ иккĕмĕш хут яла отпуска килтĕм.

Киле таврăнсан кăнтăрла иртсен Лена пирĕн пата хăпарчĕ. Вăл килнине курсан картишне тухса кĕтсе илтĕм. Анне те пирĕнпе юнашар пырса ларчĕ. «Витали, çак Ленăна ху кайиччен илсе кил-ха, эпĕ ăна хамăн хĕр пекех упраттăм», – терĕ. «Ульяна аппа, Витали салтакран килсен çырăнса пурăнма пуçлăпăр. Халлĕхе юрамасть, вăхăт çитмен-ха», – йăл кулчĕ савниçĕм. Анне хистемерĕ.

Лена, чăх-чĕп ферминче ĕçленĕ пирки, Канаша ăсатма пыраймарĕ, çавăнпа ялтах сывпуллашрăмăр. Пирĕн хутшăнăву çирĕпленсе пынăн туйăнатчĕ. Пурăна киле тем пулчĕ, Лена çыру яма пăрахрĕ. Унччен те пулмарĕ, Анна йăмăкăмран хыпар илтĕм. «Санăн юратнă хĕрӳ Лена качча тухрĕ», – пĕлтернĕ вăл. Тĕлĕнсех кайрăм, савниçĕм урăххипе пĕрлешнĕ-и? Çапла вара пирĕн Ленăпа çыхăну татăлчĕ.

Çав çулах яла килме тӳр килчĕ. Пуçлăхăн Григорий Степановичăн арăмĕ хĕрĕпе пĕрле çуралнă тăрăха – Вăрмар поселокне – килме хатĕрленнĕ. Мана чăматанĕсене йăтма хушрĕç. Григорий Степанович командировкăна янă пек документ хатĕрлерĕ. Арăмĕпе хĕрне ăсатса янă хыççăн хамăрăн яла кĕрсе тухма та ирĕк пачĕ.

Малтанах Матрӳне аппан килĕ еннелле пăрăнтăм. Эпĕ урамран кĕнине сисмерĕç, пӳрт алăкĕ шалт! хупăнсан çеç çаврăнса пăхрĕç. Ленăпа амăшĕ йывăç кравать патĕнче тем тăватчĕç. Мана курсан юратнă çын салхуланчĕ. Çав вăхăтра ача сасси илтĕнчĕ. Лена пепке çуратнă...

«Эсĕ мана юрататăп, кĕтетĕп теттĕн. Мĕншĕн качча тухма васкарăн? Кĕçех таврăнаттăм», – çак сăмахсене каламасăр чăтаймарăм. «Акă унран ыйт», – терĕ вăл амăшĕ енне çаврăнса. Матрӳне аппа шарламарĕ. Лена ачине чĕркесе хăйĕн çĕнĕ килне кайма тухрĕ. Эпĕ те Ленăпа пĕрле утрăм. «Ывăл-и е хĕр-и?» – ыйтрăм тĕпренчĕкĕ çине пăхса. «Ывăлăм Витук ятлă, сана ĕмĕр асăнмалăх çапла çыртартăм», – усăмлатрĕ çамрăк арăм. Пĕр хушă чĕнмесĕр пытăмăр. «Каçар мана, Витали, эпĕ ăна юратса качча тухман. Анне çине тăчĕ, унăн сăмахĕнчен иртеймерĕм», – пытармарĕ Лена. Иксĕмĕр çемье çавăраймарăмăр. Ĕмĕтĕм çилпе вĕçсе кайрĕ.

**Виталий НИКОНОВ.**
Шупашкар хули.

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Арăмне хĕрхенесчĕ

Кӳршĕ Лисукĕ паян каллех пирĕн пата хыпăнса ӳксе каçрĕ. Енчĕкĕнче пĕр пус юлман, ачине шăл тухтăрĕ патне илсе кайма укçа кирлĕ тет. Шел ăна. Упăшки пур çинче ыйткаланса çӳреме тивет. Икĕ çĕрте тăрăшакан мăшăрĕ халĕччен укçа тыттарса курман ăна. Хăйне кирлĕ пек пурăнать лешĕ. Çулталăкне пĕр-икĕ хутчен санаторире канать. Каçхине килне таврăнмасса та пултарать, хăйĕн ирĕкĕ. Хирĕç чĕнсе пăх-ха – çийĕнчех шăплантарать. Лисук пĕчченех выльăх-чĕрлĕх пăхать, пахча çимĕç ӳстерет. Ачисене ура çине тăратас тесе чунне пама хатĕр мăнтарăн. «Ялта пĕчченех хĕрарăм çине урлă пăхаççĕ, шăши те хӳрипе çапса кӳрентерет тесе ахальтен каламан пуль. Миша çапмасть, хĕнемест мана, хăйне кирлĕ пек пурăнтăрах, ăшши çук пулсан та хӳтти пур. Урăх хĕрарăм патне пăрахса çеç ан кайтăр», – хăйне лăплантарса çапла калакалать тепĕр чухне. Темиçе çĕрте тăрăшать Лисук, лавккара çăкăр сутать, каçхине райцентрта урай çăвать. Укçи çук чухне упăшкин машинине те ларса кураймасть мĕскĕн. Бензиншăн тӳлемесен кил умĕнчен те тапранмасть лешĕ. Çук, никам та пĕлмест кун пирки ялта, пурте вĕсем пирки лайăх пурăнаççĕ тесе шухăшлаççĕ. Нумай пулмасть мăшăрĕ каллех канма тухса кайрĕ. «Ачасем валли пĕрер михĕ çăнăх илсе парса хăвар-ха», – йăлăнсах ыйтрĕ Лисук. Хăлхине те чикмерĕ Миша, кураш-илтмĕш пулчĕ. Сумкине хăпăл-хапăл пуçтарчĕ те хăвăртрах тухса вĕçтерчĕ. Такам та, темле пурăнакан та пур пирĕн ялта. Хĕрарăм чăтать, йĕркеллĕ, этем евĕрлĕ пурăнасчĕ тесе тапăнать. Арçынна мĕн çитмест-ши? Арăмне, ачисене пăртак хĕрхенесчĕ те... Лисука чултан туман-çке, халĕ çамрăк-ха, хăçан та пулсан унăн та вăйĕ пĕтсе çитет.

**ОЛЬГА С.**
Канаш районĕ.



Николай ВАСМАТ

# Тăрна



Икĕ ял вырнаçнă тарăнах мар çырмана ĕлĕк-авалах темшĕн «Пухăрлă» тесе ят pană. Çак вырăнта питĕ сиплĕ çăлкуç тапса тăрать. Вăл çеремлĕ вырăнпа юхса анса тарăнрах вырăна çитет. Пысăк пĕве картлама питĕ лайăх вырăн. Çак вырăна савсах-тăр ял çыннисем инçетрен тăпра турттарса пысăк пĕве пĕвеленĕ. Йăлтăртатса çуталса выртакан шывĕ асфальт сарнă çулпа иртсе каякан çынсен куçне илĕртет.

Шыв таппинче нумай йывăç ӳсет. Çавсем пĕвене тата илемлĕрех, хитререх кăтартаççĕ. Мал енче те йывăççем лартса тултарнипе вĕсем вăрман пекех ешерсе кайнă. Ку пĕве таврара та пĕртен-пĕр пысăк шыв тесе калатчĕç маларах. Эпир ача чухне унран пысăкраххине чăнах та курман.

Ăçта пысăк шыв – çавăнта çын. Паллах, унта пулă та ĕрчет. Пулăççене вара çакă кăна кирлĕ. Ку кăна-и-ха, иртен-çӳрен çуллахи шăрăх вăхăтра çак вырăна чарăнса шыва кĕрсе чӳхенсе тухнă, е, камăн вăхăт нумайрах, çавсем çĕр каçмаллах канма юлнă. Пысăк пĕвере кимĕпе те ишсе çӳреме пулать. Тăп-тăрă шывĕ куçа илĕртнипе ун çине пĕр чарăнмасăр пăхса киленсе тăрас килет.

Нумай вăхăт иртрĕ-ши, асамлă çак шыва икĕ тăрна иленчĕ. Кашни çул пĕр вăхăтра вĕçсе килсе пĕвен сылтăм енче хăйсен вăрăм урисемпе çыран хĕрринче утса çӳреме пуçларĕç. Малтанласа çынсем хăйсен çывăхне пыма пуçласанах шыв варрине е аяккалла таратчĕç. Пурăна-киле çынсем хăйсене хăратманнине сиссе илчĕç пулас, çывăхне пырсан та инçете тарма пăрахрĕç. Ку пĕвере вĕсем валли апат çителĕклĕ пулмалла. Пулă нумай. Çакна вĕсем лайăх пĕлеççĕ.

Çутă шыв икĕ чун хутшăннипе тата лайăхрах çуталса курăнма пуçларĕ тейĕн, каçхи уйăх çутинче чăнласах йăлтăртатса тăракан пулчĕ. Пулăççем те нумайланчĕç. Ăçтан кăна килмеççĕ машинăсемпе. Çавăнтах çĕр каçаççĕ хăйсем. Пулă шӳрпи пĕçереççĕ е шашлăк ăшалаççĕ. Çавăнтах эрех ĕçсе ӳсĕрĕлеççĕ те савăнăçлă кĕвĕ ярса ташлама-юрлама пуçлаççĕ. Йĕри-тавралăх кĕрлесе çеç тăрать вара.

Малтан лăпкă пулнă вырăн япăхланса пыма пуçларĕ. Ăçта кирлĕ унта кăвайт çунтарнă вырăнсем, кĕленче ванчăкĕсем, пластик савăчĕсем тата мĕн кăна курма çук-ши асамлă çак вырăнта... Тир-пейсĕрлĕх тăрнасене килĕшми пулчĕ, çынсем кăшкă-рашса алхаснă вăхăтра урăх вырăна вĕçсе каякан пулчĕç. Çапах та çутçанталăкăн хăйĕн саккунĕ. Вăл мĕнле чĕрчуна та хăй çуралнă вырăна туртать. Ярасшăн мар хăй ытамĕнчен.

Шăв-шав лăплансанах иккĕшĕ те асамлă шыв хĕррине таврăнаççĕ те ишсе çӳреççĕ. Лăпкă вăхăтра пĕр-пĕринчен уйрăлмасăр ерипен шыв варрине ишсе тухсан вĕсемшĕн чăн-чăн канлĕх, чун илемĕ килсе çитет пулас, пĕрне пĕри вăрăм мăйĕсемпе ачашласа илеççĕ те малалла шăваççĕ. Çутă тӳпе вĕсемшĕн – малашлăха кăтартса тăракан пуласлăх, çав самантрах пурнăç тути-маси те. Кăшт кăна хăрушлăх сиксе тухас пулсан çуначĕсене сарса сывлăша вĕçсе хăпарайсан çăлăнма пулать. Çакă вĕсен чун-чĕринче ялан хуçаланса тăрать. Инкек-синкек пирки вара çутçанта-лăк вĕсене маларах асăрхаттарса хурать пулмалла.

Çак каç çутă кӳлĕ питĕ лăпкă çывăратчĕ. Пĕччен уйăх та тӳпере çутă çăлтăрсемпе вăйă вылятчĕ. Çыран хĕрринчи çынсем кăна темшĕн аллисене патак тытса енчен-енне уйрăлса кайрĕç те пĕр сасă кăлармасăр самантрах таçта çухалчĕç. Унччен те пулмарĕ, темĕн хăрушшăн шаплатрĕ, икĕ тăрнаран пĕрин пуçĕ çавăнтах шыва анса кайрĕ. Тепри мĕн пулса иртнине ăнланса иличчен сывлăша çĕкленчĕ. Хăранипе малтанласа сасă та кăлараймарĕ-ха, çумĕнче мăшăрĕ çуккине асăрхасан вара унăн чунĕ сӳ-ӳ! туса кайрĕ, тин мĕн пулса тухнине сиссе илчĕ. Çӳлерех çĕкленсе вăл шыв çине тинкерсе сăнама тапратрĕ. Тавралăха сăнама каç сĕмлĕхĕ кансĕрле-мерĕ: çутă уйăх пулăшрĕ ăна. Акă пуçне шыва чикнĕ унăн мăшăрĕ патне иккĕн ишсе çитрĕç. Вĕсенчен пĕри мăшăрне – халь çеç савăнса ишсе çӳренĕ мăшăрне – вăрăм мăйĕнчен аллипе ярса тытса çӳле çĕклерĕ, тепри çав вăхăтра, савăннипе ĕнтĕ, хыттăн ахăлтатса кулчĕ. Çӳлте вĕçсе çӳрекен тăрна аçи тинех ăнланчĕ ĕмĕрлĕхех пĕччен юлнине. Пĕччен тесен тĕрĕсех мар-ха, унăн чĕпписем пур. Анчах савнă мăшăрĕ, пĕрне пĕри миçе çул ĕнтĕ юратса пурăннă мăшăрĕ, çумĕнче çуккине ниепле те ăнланма пултараймарĕ. Мĕнле-ха çапла пулса тухма пултарать? Халь кăна, нумаях та пулмасть çеç иккĕн пĕрле кӳлĕ варринче савăнса ишсе çӳрерĕмĕр. Мĕн пулса тухрĕ? Иксĕмĕртен хăшĕ йăнăшрăмăр? Сиссе, курса тăтăм-çке темле тимсĕр этемсем килсе чарăннине. Вĕсем пĕртте малтанхисем пеккисем пулмарĕç. Тӳрех шыва хупăрласа илчĕç те вăрттăн пытанса выртрĕç. Çавна сиссенех сывлăша вĕçсе хăпарса ку вырăнтан çухалмаллаччĕ. Хама анне вĕрентнисе-не манса кайрăм-ши е çав çынсене шантăм-ши? Юратăвăм тата мĕншĕн сыхă пулмарĕ-ши? Эпĕ ăна шантăм пулас, вăл – мана... Эх, пурнăç! Шăпа çапла тухнă пуль пире. Мана пĕччен юлма, ăна вара – ĕмĕрлĕхех манран уйрăлма», – вĕçрĕ те вĕçрĕ тăрна сывлăшра.

Аялтан вĕçсе иртнĕ самантра каллех малтанхи пек хытă шаплатнă сасă илтĕнчĕ, çав вăхăтрах вут-çулăм курăнса кайрĕ. Хăрушă сасă илтĕнсе-нех хальччен пурăннă тăрăхран яланлăха уйрăлса каймаллине ăнланса илчĕ тăрна.

Тул çутăлса пырать ĕнтĕ. Çыран хĕрринчи путсĕрсем çаплах ахăрса, шавласа лараççĕ-ха. Тăрна хăй ăçталла вĕçнине те ăнланмасăр çуначĕсемпе малалла авăсрĕ...

Нумаях та вăхăт иртмерĕ, пĕр каç тӳпене таçтан инçетрен вĕçсе çитнĕ хуп-хура пĕлĕтсем хупăрларĕç. Вĕсем мĕншĕн-тĕр питĕ хăрушшăн курăнаççĕ. Калăн, такама çилленнĕ, темле-темле май çаврăнса йĕри-тавралăха хăратса тăраççĕ. Çутçанталăк пĕтсе килет тейĕн. Ялтăртатса çиçĕм çиçме, кĕмсĕртетсе аслати авăтса тӳперен витререн тăкнă пек çумăр лӳшкеме пуçларĕ те пĕр самантрах çырма-çатра, уй-хир тăрăх кĕрлесе шыв юхма тытăнчĕ. Кĕрлесе тулакан пĕве шыва чăтса тăрай-марĕ, ишĕлсе анса çырма тăрăх инçете-инçете юхтарса кайрĕ. Пысăк шыв йăлт хăйпе пĕрле сĕтĕрчĕ.

Çакăн хыççăн пысăк пĕве пулнă вырăн типме пуçларĕ. Çăлкуçран та шыв кăшт çеç тапса тăрать. Калăн, малтан чаплă пулнă вырăна кам-тăр ылханнă. Çуркунне çитсе ăшăтса ярсан çак вырăна пĕр тăрна кăна килсе йĕри-тавра темиçе хут вĕçсе çаврăнать. Анчах çыран хĕррине анса лармасть. Мăшăрĕпе пĕрле çак вырăнта текех нихăçан та чĕпĕ кăларса сывлăша вĕçсе хăпарма пултараймĕ вăл... Çапах тăрна çак вырăнтан ытла инçе вĕçсе каймарĕ. Вăл çывăхри шурлăхра хăйне валли вырăн тупрĕ. Унта çӳллĕ хăмăшсем кашласа лараççĕ. Çутă шыв ялкăшса выртмасть пулин те кирек хăш вăхăтра та пытанма май пур. Пĕччен юлнăскер тăрна хăш-пĕр чухне ял çывăхĕнчи йывăççем çине те пырса ларать. Тунсăх-лăн илтĕнет тăрна сасси. Мăшăрне шырама пăрах-масть тăлăх чун...

## "ТАКМАКСЕМ" КОНКУРС




### Атьăр çырăнатпăр!

Самана йывăр пулсан та
Пурăнма пĕлетпĕр.
Эрнере пĕр кун пулин те
Хаçат шĕкĕлчетпĕр.

Хаçатсем /журналĕсем те/
Тĕрлисем пулаççĕ.
Майне-шывне килтерсе те
Чăвашлах тухаççĕ.

Ак "Чăваш хĕрарăмне" те
Савăнсах вулатпăр.
Ыр сунса тус-тăванне те
Çырăнса паратпăр.

Ман юратнă хаçатăма
Чунтан калăплаççĕ.
Редакторĕ, журналисчĕ
Пĕрле тăрăшаççĕ.

Кичем чух та, савăк чух та
Хаçата тытатпăр.
Чăваш çынни маттур чух та
Ырăпа мухтатпăр.

Пĕçерме-хитреленмешкĕн
Хаçатра вулатпăр.
Ыр курма, чееленмешкĕн
Хаçатрах тупатпăр.

Тĕрлĕ-тĕрлĕ канашне те
Тăрăшса пухатпăр.
Çамрăксем те, ваттисем те
Почтăна васкатпăр.

Хаçатсем пулаççĕ тĕрлĕ –
Суйласа вулатпăр.
Пурте "Чăваш хĕрарăмне"
Атьăр çырăнатпăр!

**Елена НИКИТИНА.**
Муркаш сали.

***"Чăваш хĕрарăмĕ" хаçата халалланă такмаксен конкурсне ыт-тисен хайлавĕсене те кĕтетпĕр.***

## САВĂ СĔВЕМĔ

**Любовь ЛĔПĔШПИ**

### Яту тута çинче çĕр каçрĕ

Яту тута çинче çĕр каçрĕ,
Çут сăнару – чун-чĕрере.
Санпа çĕр каçипе калаçрăм
Асамлă çутă тĕлĕкре.

Ак çилхине силлерĕ сĕлĕ
Çут сывлăма çĕре тăкса.
Хĕвел тухсан çухалчĕ тĕлĕк,
Чунри сăнар кăна таса.

Яту тута çинче çĕр каçрĕ,
Эс çеç çӳретĕн аякра.
Сана ялан çумра курасчĕ,
Каç пулмĕччĕ ытла хура.

### Чечек çыххи

Шăппăн-шăппăн итлерĕмĕр
шыв юххине
Ун сасси кĕмĕл пек
пулнăран.
Улăхра ӳсекен чечексен
çыххине
Эс тыттартăн мана алăран.

Шур салтак тӳми пек ман
таса туйăмсем,
Юмăç ямăп татса çеçкине.
Унсăрах систерет ăшăмри
вут-хĕлхем
Эс чунтан-чĕререн савнине.

Сенкер пĕлĕт çĕре тумласа
ӳкнĕнех
Туйăнать мана утмăлтурат.
Сан куçу та, савни, янкăр
пĕлĕт тĕслех,
Çавăнпа сар хĕвел йăл
кулать.

Эп пуç кăшăлĕ çыхăп савса
сан валли
Улăхри çитмĕл çич чечекрен,
Асамат тĕсĕ пек пур унта тем
тĕрли –
Хĕрлĕ, сарă, кăвак та кĕрен.

Кашни курăкĕ хăйĕн асамлă
вăйне
Парнелетĕр пире кăмăлтан.
Улăхра ӳсекен чечексен
çыххине
Эс тыттартăн мана алăран.

**Валентина ТАРАВАТ**

* * *

Савнă çĕртех –
Савнă çын пулманни,
Тăснă алла, курман пек –
Курманни,
Ялтăр çунса –
Çутатман çутă пек.

Чĕвĕлтетсе – ăнланми
Сăмах пек.
Ăшшăн пăхса – ăшăтми
Туйăм пек.
Тапан турта –
Урараn ӳкерни
Калас тенĕ –
Калайман.
Савас тенĕ –
Савайман.

* * *

Мĕн-ма сӳнтертĕн
хевтӳне?
Хăватлăхра эс хĕм
сапатăн.
Ма çутçанталăкăн пилне
Чĕн пушăпа пустуй
хăватăн?

Иккĕленӳ ытамĕнче
Кĕвĕçӳпе кичемлĕх –
сĕмсĕр
Уç кăмăлна – пуян тĕнче:
Кирлех тĕк – вăл
вĕçĕ-хĕррисĕр

ПАТТĂРЛĂХ УРОКĔ

# Вырăс вăйĕ

***“Чăваш хĕрарăмĕн” иртнĕ номерĕсенче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче паттăрлăхпа палăрнă хĕрарăмсем çинчен сăмах пуçарнăччĕ. Паян вĕсем çинчен малалла каласа кăтартăпăр.***

### “Уçланкăри госпиталь”

1943 çулта Карпат тăрăхĕнче Украина партизанĕсем, С.Ковпак генерал ертсе пынипе, “урапа çинчи госпиталь” йĕркеленĕ. Операцисене хăвăрт кăна йĕркеленĕ сĕтелсем çинчех ирттернĕ, тепĕр чухне – уçланкăра, тӳпе айĕнче, уçă вырăнтах… Операци кун пек “пӳлĕмĕнче”, паллах, çутă та пулнă, сывлăшĕ те уçă, анчах та медиксен яланхи çи-пуçпах алла скальпель тытма тивнĕ. Çапах та лайăх стерилизациленĕ инструментсемпе, бинтсемпе кăна усă курнă.

### Чеелĕхпе те усă курнă

Тăшмана хирĕç çапăçнă çĕрте партизансен хушшинче те хĕр-хĕрарăм хастарлăхпа палăрнă. Фашиста хирĕç куçа-куçăн тухнинчен те хăрушăрах та йывăртарах пулнă ку. Курск партизанĕсен хушшинче Женя Луговскаяпа Валя Надолбных разведчицăсем палăрнă. Вĕсене 1942 çулхи авăн уйăхĕнче, тăшман тылĕнчи чукун çула сирпĕтме кайнă чухне, полицайсем ярса илнĕ. Разведчицăсене ампара хупнă. Телее, çăкăр ăшне пытарнă минăсене тупайман. Çĕрле хĕрсем урайне чакаласа тыткăнран тухса тарнă, чукун çул хĕррине çитсе минăсене кирлĕ вырăна вырнаçтарнă. Дмитриев отрядĕнчи Вера Таращенко та хăюлăхпа палăрнă. Пĕррехинче ăна командир черетлĕ хушупа тăшман тылне ăсатнă. Унсăр пуçне унăн хамăрăннисене шыраса тупса партизансем валли эмел илсе таврăнмалла пулнă. Анчах та палăртнине пурнăçлама май килмен – хĕр полицайсен аллине çакланнă. Ăна Дерюгинăна илсе кайма хушнă. Çул çинче Вера хăйне пушмакне улăштарма ирĕк памашкăн ыйтнă. Ăна-кăна тĕшмĕртмен полицай хирĕçлемен. Хĕр пĕшкĕнсе пĕр ывăç хăйăр ярса илнĕ те арçынна куçĕнчен сапнă. Лешĕ тăна кĕрсе куçне уçнă тапхăрта хĕр тарса çухалма ĕлкĕрнĕ. Командир хушнине пурнăçланă хыççăн Таращенко отряда таврăннă. Анчах та 1942 çулхи юпа уйăхĕнче Вера каллех тăшман аллине çакланнă. Хальхинче паттăр хĕрĕн çăлăнма майĕ тупăнман…

### Кăмăл çирĕплĕхĕ

1945 çул. Вăрçă чарăннă, пирĕннисем çĕнтернĕ темелле. Анчах тăшман хăш-пĕр вырăнта хаяррăн хирĕç тăма пăрахман. Стрелоксен гварди 52-мĕш Рига дивизине уйрăмах йывăр килнĕ. Икĕ енĕ те пысăк çухатусем тӳснĕ. Дивизи штабне пĕр нимĕç пынă. Вĕсем те, совет салтакĕсем те кăлăхах юн юхтарни хăйне тивĕçтерменнине палăртнă вăл – вăрçă вĕçленнĕ-çке, апла тăк мĕн тесе çапăçмалла? Нимĕç командованийĕпе мирлĕн калаçса татăлмашкăн дивизирен кама та пулин яма ыйтнă. Паллах, теветкеллĕ ку. З.Степанова куçаруçă çак утăма тума хăй ирĕкĕпе килĕшнĕ. Вăл Берлин чаçĕсен командованийĕпе тĕл пулса калаçмашкăн çула тухнă. Унпа пĕрле – пирĕн салтаксен ушкăнĕ. Анчах та палăртнă вырăна тӳрех çитме май килмен-ха вĕсен. Нумай чăрмава кăмăл çирĕплĕхĕпе усă курса кăна сирме май килнĕ. Степанова лейтенант çапла нимĕç генералĕсен путвалта вырнаçнă штабне пырса тухнă, пирĕн командирсен çырăвне тыттарнă. Анчах та лешсем пуçĕсене сулкаланă çеç – парăнасси пирки сăмах та пулма пултараймасть. Çакна курсан Степанова хĕрсе кайсах калаçма пуçланă, юн кăлăхах юхнине ĕнентерме тăрăшнă. Усси пулнă. Маттур разведчица тăрăшнипе



Берлин чаçĕсен ушкăнĕн командованийĕ вут-çулăм тăкма пăрахнă, тыткăна парăннă.

### Арçын вырăнне

Эх, хĕрсем, хĕрарăмсем, чиперуксем… Завод-фабрикăра, госпитальсенче, уй-хирте… Вăрçă пуçланнă пĕрремĕш кунсенчех вĕсем фронта тухса кайнă ашшĕсен, мăшăрĕсен, савнийĕсен, пиччĕшĕ-шăллĕ вырăнне станок умне тăнă, тырă вырнă, çапла майпа тăшмана хирĕç çапăçакансене хĕç-пăшалпа, çăкăрпа, тумтирпе тивĕçтернĕ. Пусăрăннă салтаксен кăмăл-туйăмне юрă-кĕвĕпе хавхалантарса çĕкленĕ. Совет хĕрарăмĕсем тылра çарăн чăн-чăн резервне çаврăннă. Ĕç кунĕ 10-12 сехет тăсăлнă. Канасси пирки никам та шухăшламан. “Йăлтах фронт валли” – сăмах çак çаврăнăшĕ кĕллех çаврăннă тейĕн… Кашни калаçу унран пуçланнă.

Çапла, хĕрарăм сăнĕллĕ мар вăл – хăрушă вăрçă. Анчах та 1941 çулта тĕнче умне тухса тăнă вилĕмле хăрушлăх совет хĕрарăмĕсене пурнăçа пачах урăхла хаклама вĕрентнĕ. Вĕсем арçынна танах явапла туйнă хăйсене. Çĕнтерӳ тылра та туптаннă. Нумайăн пулнă вĕсем – хăйсен пурнăçне шеллемесĕр Тăван çĕршыва хӳтĕлеме, тăшманпа çапăçма хатĕр хĕрарăмсем. Вĕсем – хăюлăх тата паттăрлăх тĕслĕхĕсем. Вăрçă йывăрлăхне пур арçын та чăтайман. Хĕрарăм вара чăтнă – парăнман. Тен, шăпах вĕсем пирки фашистсем “вырăс вăйĕ” тенĕ…

/www.otvoyna.ru/.

ÇĂЛТĂР-ХЫПАР

# Паллă кукаçисем

**Игорь Крутой, Валентин Юдашкин, Владимир Винокур… Вĕсене пин-пин çын пĕлет, çĕр-çĕр хĕрарăм юратать. Вĕсен тĕрлĕ-тĕрлĕ хисеплĕ ячĕсем çумне кĕçех тата чи сумли хушăнмалла – паллă çак арçынсем кĕçех кукашшĕ пулса тăрĕç, виççĕшĕн те хĕрĕсем кĕç-вĕç çуратма хатĕрленеççĕ.**



### Валентин Юдашкин

52-ри модельер пĕрремĕш хут кукаçи пулса тăма хатĕрленет. Хатĕрленмешкĕн вара унăн вăхăчĕ пур-ха – пĕртен-пĕр хĕрĕ Галина çитес çулхи çуркунне кăна кĕтет пепкине. Паллă çемье кĕрĕвĕ те чаплă йăхран тухнă – Петр Максаков РСФСР халăх артисткин Людмила Максаковăн мăнукĕ. Çамрăк арçын МГИМОран вĕренсе тухнă хыççăн хăйĕн ĕçне пуçланă.

Галина та, Петр та туй пирки те, ачасем пирки те хăвăртах пĕр чĕлхе тупнă – иккĕшĕ те 24 çулта кăна пулин те пĕр ĕçне те вăраха ярас темен. Çамрăксем 2014 çулхи кăрлач уйăхĕнче паллашнă та авăн уйăхĕнче хут уйăрттарнă. Анчах та туя вăрах хатĕрленнĕ. Паллах, вăл чаплă иртĕр тесе Юдашкинсем те, Максаковсем те хытă тăрăшнă. Качча тухакан хĕрĕн чаплă кĕпине кам янтăлани каламасăрах паллă – пикен ашшĕ тата каччăн хуняшшĕ. Туй кĕрекине тăванĕ-пĕтенĕпе тус-юлташне мăшăр кăçалхи утă уйăхĕнче пухнă – тĕп хулари чи паллă пулăмсенчен пĕри пулса тăнă вăл.

Çăлтăр шайĕнчи туй-çуй шăв-шавĕ лăпланса пĕтмен, çамрăк мăшăр ашшĕ-амăшне татах та савăнăçлă хыпар пĕлтерме васканă – кĕçех йыш хушăнĕ. Валентин Юдашкинпа унăн мăшăрĕ Марина вĕсен мăнукĕ арçын ача пулассине халех пĕлеççĕ. Тĕрĕссипе, вĕсем çамрăксем хăйсен алли-урине халех ачапа çыхса лартасса кĕтмен – Петр IT-технологийĕпе аппаланать, Галинăн чаплă проектсем: вăл профессионал фотограф. Унсăр пуçне фитнес-студи те тытса тăрать çамрăк хĕрарăм. Анчах та нумаях пулмасть кăна пĕрлешнĕ мăшăр çутçанталăк саккунĕсене хирĕç каяс темен. Халĕ вĕсем ĕçре вăхăт ирттернипе пĕрлех тăрăшсах ашшĕ тата амăшĕ пулма хатĕрленеççĕ.

### Игорь Крутой

Раççей тата Украина халăх артисчĕ Игорь Крутой вăт-вăт çак кунсенчех кукашшĕ пулса тăрĕ. Виктория, Игорĕн мăшăрĕн Ольгăн хĕрачи, çывăх çыннисене çак хыпарпа савăнтарма хатĕрленет. Крутой Ольгăн хĕрачине пĕчĕклех хăйĕн хушаматне парса тăван пепки пекех ӳстернĕ. 30-ти Виктория тата унăн мăшăрĕ Давид Беркович ресторатор Америкăра пурăнаççĕ. Пулас амăшĕ профессионал шайĕнче юрлать. Ача кĕтнĕ майăн та юратнă ĕçне пăрахмасть хĕрарăм – çурла уйăхĕн вĕçĕнче кăна вăл çĕнĕ юррине куракан-итлекен патне çитернĕ.

Кĕç-вĕç çут тĕнчене килмелли пепке Игорь Крутойăн иккĕмĕш мăнукĕ пулĕ. Пĕрремĕш мăнукĕ, пиллĕкри Кристина, Игорĕн пĕрремĕш арăмĕнчен çуралнă ывăлĕн Николайăн хĕрачи, композитор çемйинче ӳсет. Игорь Крутой хăй телейлĕ аслашшĕ пулнине пытармасть, ачасене питĕ юратнине пĕлтерет. “Ку питĕ пысăк савăнăç тата телей, – тенĕ Игорь Крутой пĕр интервьюра. – Эпĕ пĕчĕк ачасене чăтма çук юрататăп. Тен, çавăнпах пысăк хырăмлă хĕрарăмсем çине пăхма килĕштеретĕп”.



Çут тĕнчене килме хатĕрленекен хĕр пĕрчи валли ят та тупса хунă ĕнтĕ. Пулас кукашшĕ палăртнă тăрăх, телейлĕ мăшăр темиçе ят та суйланă, анчах та хăшне ытларах килĕштерни пирки ача çуралсан кăна пĕлтерĕç.

### Владимир Винокур



Шӳт паллă ăсти пĕрремĕш мăнукне ниçта кайса кĕрейми кĕтет – вăл кăçалхи хĕлле çуралмалла. Артист хĕрĕ Анастасия, Пысăк театр балерини, декрет отпускĕнче. 30 çулти хĕрарăм ача кӳми туянса хунă ĕнтĕ. Нумаях пулмасть вара, Анăçри модăпа килĕшӳллĕн, çывăх çыннисене çуралас ачана халалланă baby shower уява чĕннĕ. Уявра сĕтел-пукана тата ытти япалана илемлетме кăвак тĕс суйласа илнине кура ывăл çураласса кĕтни палăрнă.

Владимир Винокур хĕрне 2013 çулта Григорий Матвеевич продюсера качча панă. Хутшăнусене мăшăр хут уйăрттарса кăна мар, туй хыççăн пĕр уйăхран чиркĕве кайса венчете тăрса çирĕплетнĕ. Артист каланă тăрăх, ăна пулас кĕрӳвĕ тӳрех килĕшнĕ, çавăнпах вăл хĕрне унпа мăшăрланмашкăн тӳрех ирĕк панă. Хăйĕн мăшăрĕпе Тамара Перваковăпа, сăмах май, вăл та Пысăк театр балерини пулнă, Винокур вăтăр çул ытла пĕрле килĕштерсе пурăнать. Хĕрне те артист çемье пурнăçĕнче çакăн пекех вăрăм кун-çул тата тулли телей сунать.



# И-ХИ-ХИК

Эрнекун каçхине.

– Ырантан çĕнĕ пурнăç пуçлатăп!

Тунтикун ирхине.

– Мĕн пиркиччĕ-ха эпĕ?..

* * *

Хĕрарăм каçхине лайăх хăналаннă курăнать. Ирхине пуçĕ ыратнипе вăранса каять хайхи.

– Эсĕ кун пек чухне мĕн тăваттăнччĕ? – ыйтать хĕрарăм сиплевре пулнă хыççăн ĕçме пăрахнă упăшкинчен.

– Мĕн тăваттăмччĕ-мĕн тăваттăмччĕ... Эсĕ нăрланине итлесе выртаттăмччĕ...

* * *

Хăнана каяс умĕн вырăн сарса хăварăр. Мĕн тери ăслă çак утăмшăн хăвăра хăнаран таврăнсан мухтаса та çитерейměр...

* * *

– Эпĕ сана гитара шантарнăччĕ, – тет ашшĕ ывăлне.– Акă ме, тыт.

– Хĕлĕхĕсем ăçта вара? – тĕлĕнет ачи гитарăна апла та, капла та çавăрттарнă май.

– Выляма вĕрен-ха малтан, кайран хĕлĕхĕсем те пулĕç.

* * *

– Санăн çӳçӳ питĕ илемлĕ – кур-ха: мĕнлерех авăнса тăрать!

– Хам та тăрăшрăм çав! Ирхине ятарласа кăтралатрăм.

– А-а-а, эсĕ ăна хăв çапла тунă-им? Эпĕ хăех кăтра тесе...

– Хăех кăтра пулнă тăк вара эпĕ ăна тӳрлетĕттĕм...

* * *

Ют çĕр-шыв фирми çĕнĕ сейф шухăшласа кăларнă. Ăна тĕрĕслемешкĕн тата рекламăламашкăн конкурс пĕлтернĕ – сейфа 1 миллион тенкĕ хураççĕ, çутта виçĕ минутлăха сӳнтереççĕ, кам пултарать – çав илет.

Конкурса виçĕ çĕр-шыв хутшăнма кăмăл тăвать: Америка, Германи тата Раççей. Малтанах американсем тухаççĕ. Çутă сӳнет. Чакаланаççĕ-чакаланаççĕ хайхисем. Çук, нимĕн те пулмасть. Вĕсемпе нимĕçсем тупăшаççĕ. Çутă сӳнет. Виçĕ минут иртет. Кусен те нимĕн те пулмасть. Вырăссен черечĕ çитет. Çутă сӳнет. Хайхисем ĕçлеме пуçлаççĕ. Виçĕ минутран... çутă çук. Татах пусаççĕ – çутăлмасть. Мĕн амакĕ? Тĕттĕмре сасă илтĕнсе каять:

– Саня, вĕсен лампочкисемпе мĕн тăватăн? Санăн кĕсйӳнте – миллион!

* * *

Çĕнĕ супер-паттăр – студент! Вăл пĕр раштавра кăна авăн, юпа, чӳк уйăхĕсенче пурнăçламалли ĕçсене туса ĕлкĕрет!

* * *

"Кунта Саша пулнă", "Кунта Ваççа пулнă", "Кунта Слава пулнă"... Тем вĕчĕрхентерет... Те почеркĕсем килĕшмеççĕ, те – çакна йăлтах хамăн çывăрмалли пӳлĕмри шкапра тупса вулани...

* * *

Пĕр хĕр принц шурă лаша утланса çитессе кĕтнĕ-кĕтнĕ... Ун патне вара почтальон пынă... пенси парса хăварнă...

* * *

Хĕр логики.

Ах, анчах, вăл унта ан пултăрах!

Ах, анчах, мĕншĕн килейменши вăл?

* * *

Адвокат тĕрмене пĕр "чăнкă" арçын патне пынă.

– Акă сана пĕр чăматан укçа! – тет лешĕ. – Судья кăмăлне çавăр, мана пĕр çулталăклăха кăна хупчăр.

– Манăн шухăшпа... – калама тăрать адвокат.

– Санăн шухăшу никама та кăсăклантармасть, – каласа пĕтерме памасть ăна арçын. – Пĕр çулталăк! Унран ытла мар. Ăнлантăн-и?!

Хайхи суд пулать. Арçынна пĕр çулталăклăха ирĕклĕхсĕр хăвараççĕ.

– Йывăр пулчĕ-и? – ыйтать савăннă арçын адвокатран.

– Питĕ йывăр – вăл сана пачах хупасшăн марччĕ...

* * *

– Алло! – шăнкăравлать пĕчĕк арçын ача кукамăшĕ патне. – Санăн хĕрӳ ман çине кăшкărать!

* * *

14 çулти хĕр пĕрчин статусне вулатăп – "сăра ĕçсе ларатăп, арçын пирки ĕмĕтленетĕп..." Эпĕ тем тĕрĕс мар пурăнатăп курăнать – 34 çула çитрĕм ĕнтĕ, апельсин çиетĕп, телевизорпа Машăпа упа çинчен мультфильма юратса пăхатăп...

* * *

Сунарçă тайгана ухутана тухнă. Вырăна начар пĕлнипе çул кăтартакана пĕрле илнĕ. Лешĕ малта вăрăм пурттипе сулкалашса çул уçса пырать, сунарçă – ун хыççăн. Инçех те каяймаççĕ – упа сиксе тухать! Çул кăтартса пыракан пурттине çӳлелле çĕклесе хытса тăрать, упа та шалт аптранă: хускалмасть. "Кил кунта!" – хыçалалла çаврăнса пăхмасăр чĕнет сунарçа çул кăтартакан. Шăп, хыçалта нимĕн те илтĕнмест. "Кунта кил тетĕп!" – тарăхма пуçлать малта пыраканни. Татах чĕнекен çук. "Кил кунта!!!" – çĕлен пек чашкăрать хайхи. "Мĕн тума чĕнетĕн эсĕ ăна?" – аран-аран илтĕнмелле пăшăлтатни илтĕнсе каять хыçалтан.

* * *

Ача тупмалли юмах тупсăмне шырать:

– Е самăрланать, е начарланать, е пĕр пӳрт кăшкăрать...

"Купăс", – мĕлтлетет пуçра шухăш.

– Анне, – хаваслăн пĕлтерет шăпăрлан.


# РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

## СУТАТĂП/ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 32 руб., 12х20х40 – 27 руб., 9х20х40 – 23 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. **Т. 8-960-307-31-51.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Т. 8-960-307-31-51.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**15. Кирпич**, блоки. Т. 89613393363.

**20.Кирпич:** красный, цветной, облиц. Скидки. Т. 89276678378.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**74.Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 89176776846.

**123.Гравмассу, песок, бетонные отходы, навоз.** Доставка по низким ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**777.БОЧКИ с крышкой** 200 л. для муки, отрубей. Т. 89613429059.

## ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

## ПУЛĂШУ/УСЛУГИ

**38.ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-967-471-50-70.

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**745.Утепление домов пеноизолом.** Гарантия. Скидки. Т. 380373.

**750.**Веселая **тамада.** Т. 89373935779.

## ĔÇ/РАБОТА

**126. Монолитчики, плотники,** монтажники, шлифовщики, **каменщики, сварщики.** Питание, спецодежда. Вахта. Тел. 8-925-002-22-38.

## ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

Пĕрле пурăнма хĕрарăм шыратăп. Эпĕ 57 çулта. Гена ятлă. Т. 8-937-374-09-83.

АУ «Издательский дом «Хыпар»
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
на 7 этаже Дома печати.
Справки по телефонам, 28-83-70, 56-04-17.


# Сăмах каçмăш

**Н.Краснов /Йĕпреç районĕ/ хатĕрленĕ**

1. Çурт-йĕр ăсти. 2. Хими элеменчĕ. 3. Пушă. 4. Ӳнерçĕ ĕçĕ. 5. Тĕвесен ушкăнĕ. 6. Инçет хĕвелтухăçĕнчи утрав. 7. Хурт-кăпшанкă. 8. Пушкăрт халăхĕн паттăрĕ – ... Юлаев. 9. Хавшак çын. 10. Чăваш юрăçи. 11. Çывăх çын. 12. Ĕлĕкхи "налук". 13. Кĕпер пайĕ. 14. Юмахри сăнар ... – Барабас. 15. Хоккеист, Олимп чемпионĕ, вăлах комментатор. 16. Кĕвĕ инструменчĕ. 17. АПШри юханшыв. 18. Хурма сорчĕ. 19. Одиссей ывăлĕ. 20. Грексен ăсчахĕ. 21. Вĕçенкайăк. 22. Çар çынни. 23. Шкул ачисен отпускĕ. 24. К.Маркс "пуянлăхĕ". 25. Çĕрулми /диал./. 26. Спорт ушкăнĕн пуçлăхĕ. 27. Сылтăм мар. 28. Уринен ури урлă /туп. юм./. 29. Вăл Африкăра пур. 30. "... шыв кăларать, хура куракĕ ырă ятлă пулать" /ват. сăм./. 31. Пĕчĕк машинăсен ăмăртăвĕ. 32. Кăнтăрти йывăç.




« ХЫПАР »

Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан М.М.АРЛАНОВ

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07

**Электрон почти:** hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федерации саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 13.11.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 7576. Заказ 4411.